чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ЮН КУН 2014, çĕртме /июнь/ 11

112-113 /26518-26519/ № № Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Чыслав

# "Пархатарлă ĕçĕршĕн тавах..."





Г.ВЕРБЛЮДОВ сăнӳкерчĕкĕсем

## Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!

**Сире Раççей кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

Çак уяв этем прависемпе ирĕклĕхĕсем, демократипе уççăнлăх, граждан тăнăçлăхĕпе çураçу принципĕсем тĕп вырăнта пулнине уççăн пĕлтернĕ пирĕн аслă патшалăхăмăрăн аталанăвĕнчи çĕнĕ тапхăра сăнарлать.

Раççей – историпе культурăн сайра йышши еткерĕллĕ, вĕççĕр-хĕрсĕр çĕрлĕ, çут çанталăк пурлăхĕсемпе калама çук пуян, хăватлă та ирĕклĕ çĕр-шыв. Тĕнчере унăн ятне пысăка хурса хисеплеççĕ, вăл ют çĕр-шывсемпе хăйĕн хушшинчи хутшăнусене пĕр-пĕрне хисеплени тата пĕр танлăх принципĕсем çинче йĕркелет, терроризмпа çине тăрса кĕрешет. Йывăр вăхăтра Раççей çыннисем, тăванпа тăвана çапăçма хистекен вăрçа тапратса яма хăтланнă экстремистсенчен хӳтĕлесе, Крымра пурăнакан халăхсене витĕмлĕ пулăшу кӳчĕç.

Чăваш Ен – Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен туслă çемйин тан правăллă членĕ. Пирĕн республикăра 127 наци çынни тата 8 халăх ушкăнĕ туслă та килĕштерсе пурăнаççĕ. Кашни халăхăн – хăйĕн историйĕ, хăйĕн йăли-йĕрки, вĕсем пĕр-пĕринпе уйрăлми тачă çыхăннă. Эпир экономикăпа ăслăлăх, искусствăпа спорт тата ытти енĕпе тăвакан хамăрăн пĕрлехи ăнăçу-çитĕнӳсемпе тивĕçлипе мухтанатпăр, çитменлĕхсене те пĕрлех тӳрлететпĕр, çемье тата пĕтĕм этемлĕх хаклăхĕсене тĕпе хурса тăрăшсах граждан обществи тăватпăр.

Раççей çыннисен иксĕлми юратăвĕ, ĕçченлĕхĕ тата патриотлăхĕ пирĕн Тăван çĕр-шывăмăра тата та илемлĕрех, вăйлăрах тата пуянрах тăвасса шанса тăратăп. Пурне те çирĕп сывлăх, ырлăхпа тăнăçлăх, телей тата мĕн пур лайăххине сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М.ИГНАТЬЕВ.**

*Медицина ĕçченĕн кунĕ умĕн, çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Чăваш хутлăхĕн сывлăх сыхлавĕн тытăмĕнче вăй хуракансем савăнăçлă уява пуçтарăнчĕç.*

Мероприятие ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова уçрĕ, ĕçтешĕсене – хăйсен пултарулăхĕпе ăсталăхне тăван халăхăмăрăн сывлăхне упрамашкăн тата çирĕплетмешкĕн парнелекен ырă чунлă та ăш пиллĕ сиплевçĕсене – професси кунĕ ячĕпе ăшшăн саламларĕ.

"Пирĕн ĕçри тĕп кăтарту – çынсен кунçулĕ вăрăмланни. Паянхи кун тĕлне асăннă чикĕ 70 çул урлă каçрĕ. Сывлăх сыхлавне çĕнетсе улăштарни, ăна аталантармашкăн пин-пин тенкĕ хывни, тӳлевсĕр майпа диспансеризаци ирттерсе чир-чĕре малтанхи тапхăртах тупса палăртма пултарни, ялсенче хальхи йышши çĕнĕ ФАПсем çĕкленни, медицина пулăшăвĕн пĕрремĕш сыпăкне пурнăç ытнă пек йĕркелени асăннă тытăма тивĕçлĕ шая çĕклерĕç паллах. Çитĕнӳсене туптакансем çапах та эсир, сирĕн ылтăн алăсем, пуян чунăрсем. Пĕрлехи вăйпа эпир умри тĕллевсене çăмăллăнах çĕнсе илеетпĕр, – терĕ министр. – Паян çак залра медицинăн вăтам тата аслă пĕлĕвĕн заведенийĕсенче вĕренекенсем – пулас тухтăрсем – пирĕнпе пĕрле уяв саманчĕпе хĕмленеççĕ. Ыран вĕсем пирĕн йыша хушăнса сывлăх сыхлавне аталантармашкăн тытăнĕç. Вĕсене хапăлласа кĕтетпĕр. Ун чухне тата хăватлăрах пулăпăр. Тавах сире пархатарлă ĕçĕршĕн".

Уяв мероприятине Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев мăшăрĕпе Лариса Юрьевнăпа пĕрле хутшăнчĕ. "Тимлĕхĕршĕн, ырă кăмăлăршăн тав тăватăп. Сирĕн пархатарлă ĕçĕр халăхăн социаллăх тĕлĕшĕнчи тăнăçлăхĕпе тӳрременех çыхăннă. Сирĕн витĕмĕрпе çынсен ĕмĕрĕ вăрăмланать, демографи лару-тăрăвĕ лайăхланать, çут тĕнчене çĕнĕ кайăк ытларах килет. Çакăнпа чăннипех мăнаçланмалла, – палăртрĕ Михаил Васильевич. – Çапах та уяв мероприятийĕнче çитĕнӳ пирки кăна мар, малашлăх тĕллевĕсем çинчен те калаçмалла, медицина пулăшăвĕн пахалăхне лайăхлатмалла, ку енĕпе çынсен кăмăлне тивĕçтермелле. Сывлăх сыхлавне пин-пин тенкĕ хыватпăр, сыватмăшсене тĕнче шайĕнчи кăткăс та пысăк технологи оборудованийĕпе пуянлататпăр. Сирĕн пултарулăхăрсăр хăйсем тĕллĕн вĕсем нимпех те пулăшаймĕç. Чăваш Енри медиксен 22 пинлĕ йышĕ çĕнĕ йышши техникăна тĕрĕс-тĕкел ĕçлеттерсе халăх сывлăхне сыхламашкăн чĕре хушнипе, чун туртнипе кар тăнă.

Сывлăха упрассишĕн пирĕнтен кашнийĕн тăрăшмалла, сывă пурнăç йĕркине пăхăнмалла, спортпа туслашмалла".

Чăваш Ен Пуçлăхĕ пысăк уява пушă алăпа килмен: республикăн сывлăх сыхлавне аталантармашкăн хывнă сумлă тӳпешĕн вăл республикăри клиника больницин уйрăмĕн ертӳçине Александр Кротова, Вячеслав Оленин хирурга Чăваш Республикин Хисеп грамотипе, сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕн çумне Татьяна Богдановăна, республикăри клиника больницин кардиологне Надежда Верендеевăна, онкологи диспансерĕн тĕп тухтăрне Игорь Долгова, микрохирурги комплексĕн офтальмологне Валерий Никитина "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ" ятпа чысларĕ.

Савăнăçлă мероприятире "Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕн чи лайăх учрежденийĕ" тата "Професси енĕпе чи лайăххи"конкурссен çĕнтерӳçисене палăртрĕç. Медиксен пысăк ушкăнĕ Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствисен Хисеп хучĕсене тивĕçрĕ.

Уяв каçне пултарулăх ушкăнĕсем хăйсен юрри-кĕввипе илем кӳчĕç.

**Валентина СМИРНОВА**

«Хыпар» Издательство çурчĕн мĕн пур кăларăмне Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех сырăнтараççĕ:

«Хыпар» – 744 тенкĕ те 12 пус.
«Хыпар» – шăмат кун» – 321 тенкĕ те 96 пус.

Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене «Чăваш пичет», «Советская Чувашия» киоскĕсенче тата редакцире çырăнма пулать.

«Хыпар», «Çамрăксен хаçачĕ»: электрон çырăнтару



2014 çулăн II çурри валли «Хыпара» – 90, «Çамрăксен хаçатне» – 50 тенкĕпе çырăнса илме пулать.

Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра

## Уяв ячĕпе!

**Медицинăн хисеплĕ ĕçченĕсем тата сывлăх сыхлавĕн ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕ ячĕпе саламлатăп! Çынсен сывлăхĕ тата пурнăçĕ врачăн пысăк профессионализмĕнчен, ырă та ăшă кăмăлĕнчен килеççĕ, çавăнпа медицина ĕçченĕсем яланах хисеплĕ пулнă.

Чăваш Республикинче пысăк технологи медпулăшăвне, реабилитаци технологийĕсене, чирсенчен сыхланмалли профилактикăна аталантарасси патшалăхăн сывлăх сыхлавĕн сферинчи политикин тĕп çул-йĕрĕ пулса тăрать.

Сывлăх сыхлавне çĕнетмелли программăна ăнăçлă пурнăçлани медицинăри пулăшу ĕçĕсен пахалăхне çĕнĕ шая çĕклеме май пачĕ. Республикăри медицина центрĕсенче неонатологи, акушерпа гинекологи, онкологи, травматологипе ортопеди, абдоминаллă, торакаллă хирурги, чĕрепе юн тымарĕсен тата ачасен хирургийĕн профилĕсемпе ăнăçлă пулăшаççĕ. Чăваш Ен медицина реабилитацине аталантарас енĕпе «пĕтĕм çĕр-шывшăн ылтăн эталон» шутланать. Чылай çул ĕнтĕ пирĕн тин çуралнă ачасем вилессин тата чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсене пула вилессин кăтартăвĕсем çĕр-шывра чи пĕчĕккисен шайĕнче.

Больницăсен пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетес, çĕнĕ йышши медицина учрежденийĕсем тăвас, киввисене реконструкцилес енĕпе тимлĕ ĕçлетпĕр. Ялсенче 2013-2015 çулсенче çĕнĕ 100 модуль фельдшерпа акушер пункчĕ уçмалла. Çак мерăсем врачсемшĕн анлăрах майсем уçĕç, медицина пулăшăвĕпе пурте усă курассине, унăн пахалăхне лайăхлатĕç, пациентсемшĕн хăтлăрах условисем йĕркелеме май парĕç.

2013 çулта юлашки 5 çул хушшинче пуçласа врачсен кадрĕсен йышĕпе çыхăннă лару-тăрăва тăнăçлăх кÿме пултартăмăр. Сиплев учрежденийĕсене вĕренÿ заведенийĕсене пĕтернĕ 200-е яхăн çамрăк килчĕ. «Земство тухтăрĕ» программăпа килĕшÿллĕн 2012-2013 çулсенче ялсенчи сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсене çамрăк 186 специалист ĕçлеме вырнаçнă.

Патшалăх тăрăшнипе тата сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсем ырми-канми вăй хунипе Чăваш Енре çулленех демографи кăтартăвĕсем лайăхланса пыраççĕ. Халăх йышĕ хăй тĕллĕн ÿссе пыни палăрать, çынсен пурнăç тăршшĕ вăрăмланать.

Медицинăн хисеплĕ ĕçченĕсем, сире ырми-канми тата пархатарлă ĕçĕршĕн, ырă кăмăлăрпа тимлĕхĕршĕн чĕререн тав тăватăп. Çирĕп сывлăх, ăнăçусем, ырлăх тата телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

## Президент саламланă

***Раççей Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева Раççей кунĕ ячĕпе саламланă.***

«Эпир Тăван çĕр-шывăмăрпа, унăн мухтавлă историйĕпе, патриотизмăн ăруран ăрăва куçса пыракан çирĕп йăлисемпе чунтан мăнаçланатпăр. Пирĕн асаттесемпе мăн асаттесем Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне нумай ĕмĕр хÿтĕленĕ. Унăн культура, ăс-хакăл тата пултарулăх хăватне ÿстерсе пынă. Пирĕн хаклă çак еткере тирпейлĕ упрамалла, Раççей шăпи, унăн шанчăклă малашлăхĕ пирĕнтен кашнинчен, эпир вăй хурса ĕçленинчен, пирĕн яваплăха тĕпе хуракан гражданин позицийĕнчен килнине яланах асра тытмалла. Сире ăнăçусем тата ыррине сунатăп», – тенĕ саламра.

Госслужба занятости Чувашии

# Ĕçлевĕн çивĕч ыйтăвĕсене сÿтсе явнă

***Çу уйăхĕн 4-мĕшĕнче Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин коллегийĕн ларăвĕ иртрĕ. Асăннă мероприятие ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕн çумĕ Галина Германова, патшалăхăн Чăваш Республикинчи ĕçлевĕн тĕп инспекторĕн çумĕ Раиса Павлова, «Пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин» республикăри организацийĕн председателĕ Маргарита Кузьминых, Шупашкар хула администрацийĕн управлени ертÿçи Евгений Максимов, районхулари ĕçпе тивĕçтерекен центрсен, «Аспект» вĕренÿпе методика центрĕн директорĕсем хутшăнчĕç.***

***Коллеги ларăвне ведомство ертÿçи Сергей Димитриев уçрĕ, пухăннисене Чăваш Республикинчи ĕç рынокĕнчи хальхи лару-тăрупа паллаштарчĕ, ĕçлевĕн çивĕч ыйтăвĕсене палăртрĕ.***

### Рынокри лару-тăру

Ĕçлев службин органĕсенче кăçалхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 4402 çын учетра тăнă, ĕççĕрлĕхĕн экономикăна пуçарулла хутшăнакан халăхăн шучĕпе танлашакан шайĕ 0,66 процент пулнă /2013 çулхи çав вăхăтра ку кăтартусем – 5347 тата 0,82 /. Ĕç паракансем служба органĕсене çак тапхăрта 18654 ваканси е вырнаçас текен кашни çын пуçне 3 тивни çинчен пĕлтернĕ.

2014 çулта халăха ĕçпе тивĕçтерессипе çыхăннă мероприятисем Чăваш Республикин 2012-2020 çулсем валли йышăннă «Халăха ĕçпе тивĕçтересси» патшалăх программин икĕ çум программипе /«Халăха ĕççĕрлĕхрен хÿтĕлессипе тивĕçтересси тата ĕçе вырнаçма пулăшасси», «Чăваш Республикинче ĕçĕрпе инвалидсене, сусăр ача çитĕнтерекен тата нумай ачаллă ашшĕамăшне ĕçе вырнаçма пулăшасси»/ килĕшÿллĕн пурнăçа кĕреççĕ.

Палăртнă мероприятисене кăçал 81613 çынна хутшăнтармалла /2013 çулхи планăн 100,1 проценчĕ чухлĕ/. 2014 çулхи кăрлач-çу уйăхĕсенче вĕсенче 33911 çын пулнă, ку енĕпе çулталăкри задание 41,6 процент пурнăçланă.

Ĕçлев службин органĕсем пулăшнипе пилĕк уйăхра 15035 гражданин /палăртнин 36,0 проценчĕ/ вырнаçма пултарнă. Ку енĕпе район-хулари центрсем пурте план кăтартăвĕсене тултарнă.

Ĕç шыраса служба органĕсене пулăшу ыйтма пынă граждансене вырнаçтарнин шайĕ кăçалхи кăрлач–çу уйăхĕсенче республикăра 82,5 процента çитнĕ /кăçалхи тĕллев индикаторĕ – 82,6/. Ĕç шыракансене вырнаçтарассин шайĕпе 2013 çулхи кăтартусем тăрăх Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче Чăваш Ен виççĕмĕш вырăна тухнă. Служба органĕсене тивĕçлĕ ĕç тупас тĕллевпе пынă граждансенчен ĕçлĕ пулнисен тÿпи Чăваш Республикинче пĕлтĕр 82,5 процент шутланнă /Раççей Федерацийĕнче – 64,2/.

### Инвалидсем валли – ятарлă вырăн

Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертÿçин çумĕ Наталья Тараканова Чăваш Республикин 2011 çулхи чÿк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи «Чăваш Республикинче инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем квотăласси çинчен» 68-мĕш саккунне службăна органĕсем пурнăçласа пыни çинчен доклад туса пачĕ.

Наталья Евгеньевна палăртнă тăрăх – хальхи вăхăтра республикăра 91 пин ытла инвалид пурăнать, вĕсенчен 17,4 пинĕшĕ вăй питти ÿсĕмре. 10 пин ытла сусăра ĕçлеме сĕннĕ, вĕсенчен 5,5 пинĕшĕ производствăна хутшăнать, 4,5 пинĕшĕ хальлĕхе ĕççĕр шутланать.

Раççей Президенчĕн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнчи «Патшалăхăн социаллă политикине пурнăçламалли мероприятисем çинчен» 597-мĕш Указĕпе килĕшÿллĕн республикăра инвалидсене ĕçпе тивĕçтерес тата вĕсене обществăна интеграцилес енĕпе мерăсен комплексне пурнăçа кĕртеççĕ.

Вĕсенчен пĕри – сусăрсем валли коллективсенче вырăн квотăлани. 100 çын ытла вăй хуракан организацисенче сусăрсене йышăнмалли квотăна кăçалхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 89,0 процент пурнăçланă,1598 инвалида вырăн тупса панă. Кăрлач-çу уйăхĕсен кăтартăвĕсемпе муниципалитетăн 8 йĕркеленĕвĕнче – Улатăр, Элĕк, Куславкка, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă районĕсенче тата Çĕмĕрле хулинче – квотăна 100 процент тултарнă. 35-100 çынлă организацисенче ăна пурнăçласси кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчи 42,0 процентран çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче 63,4-та çитнĕ, 670 инвалид ĕçлĕ пулнă. Улатăр /100 процент/, Комсомольски /92,3/, Вăрмар /91,7/, Тăвай /87,5/ районĕсем пуçарулăх кăтартнă.

Çÿлерех асăннă мерăсен шутĕнче – инвалидсене ятарласа йĕркеленĕ вырăна йышăнасси. Çапла майпа 2011 çултанпа вырнаçтарнă 555 инвалидран 439-шĕ паянхи кунччченех ĕçлет. 55 вырăна вара организацие хупнипе пĕтернĕ, 61-шне йышăнмашкăн центрсемпе ĕç сĕнекенсем кандидатсене пĕрле суйлаççĕ.

Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин иртерекен мониторинг кăтартăвĕсем тăрăх – республикăри бюджет тытăмĕн организацийĕсенче кăçалхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 74229 çын вăй хунă тăк, вĕсенчен 1377-шĕ инвалид /1271-шĕ – виççĕмĕш ушкăнри, 100-шĕ – иккĕмĕшри, 6-шĕ – пĕрремĕшри/.

2013 çулта патшалăх службин инвалидсене йышăнмалли вырăнсене квотăласси пирки йышăннă саккуна пурнăçланине тĕпчес тĕллевпе вырăна тухса 11 тĕрĕслев ирттернĕ, вĕсем тăрăх административлă майпа йĕркене пăсни çинчен 11 акт тата 2 протокол çырнă. Кăçал 7 çĕрте тĕрĕсленĕ, йĕркене пăхăнман тĕслĕхсене палăртса 7 акт тата 5 протокол хатĕрленĕ, «Раççей перекет банкĕн» Чăваш Республикинчи 28613 уйрăмĕ тĕлĕшпе миравай судья йышăнăвĕпе айăплав палăртнă.

Инвалидсене ĕçпе тивĕçтермелли мерăсене пурнăçлама тытăннăранпа – 2011 çултанпа – служба центрĕсене пулăшу ыйтса пыракан сусăрсен йышĕ 2748-тан 2013 çулта 1771 таран йышсăрланнă, вĕсен шутĕнче ĕç тупса панă инвалидсен тÿпи вара 50,1 процентран 64,7 çитнĕ /Раççей Федерацийĕнче – 39,7 процент/.

Инвалидсене вырнаçтарнин эффективлăхĕ тăрăх Чăваш Республики Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче 6-мĕш вырăн йышăнать.

Кăçалхи кăрлач-ака уйăхĕсенче служба органĕсене тивĕçлĕ ĕç шыраса 522 сусăр пынă, вĕсенчен 314-шне е 60,1 процентне вырнаçтарнă.

Ку енĕпе пухнă паха опытпа Етĕрне тата Шупашкар районĕсенчи ĕçлев центрĕсен директорĕсем Виктор Ковалев тата Олег Александров паллаштарнă.



### Пурнăç ыйтакан профессие вĕрентмелле

Патшалăх службин пай пуçлăхĕ Татьяна Фомина «Граждансен уйрăм категорине ĕçлев службин органĕсем янипе професси пĕлĕвĕ тата профессин хушма вĕренĕвĕ парасси çинчен» ыйтупа тухса каласрĕ.

Татьяна Евгеньевна палăртнă тăрăх – кăçалхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 970 çын професси вĕренĕвне вĕçленĕ.

Раççей тата Чăваш Республикин правительствисем палăртнă тăрăх – ĕççĕр шутланакан граждансене пысăк тухăçлă ĕç вырăнĕсене ярас тĕллевпе вĕрентмелле. Центрсенче çакна тивĕçлипе хаклаççĕ, асăннă ыйтăва предприятисемпе çыхăнса татса параççĕ.

Татьяна Фомина ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн илнĕ отпускри амăшĕсене, тивĕçлĕ канăва тухнисене тата производство тытăмне модернизацилекен организацисене тăрăшакансене професси пĕлĕвĕ илме е квалификацие ÿстерме ярас ыйтусем çинче те чарăнса тăчĕ.

«Пирĕн тĕллев – мероприятисене хутшăнакансен йышĕ енĕпе палăртнă кăтартусене ăнăçлă пурнăçласси кăна мар, вĕсен эффективлăхне ÿстерессипе те, çав шутра вырăн тупса панисен тата çавăнта çирĕпленсе юлнисен, пысăк тухăçлă производствăна янисен тÿпине ÿстернипе те кăтартусене лайăхлатмалла. Паллах, професси вĕренĕвĕ илнĕ хыççăн тепĕр хут учета тăнисен йышне чакарса пынипе те», – пĕтĕмлетрĕ Татьяна Евгеньевна.

Çĕмĕрле хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр директорĕ Татьяна Феклистова ку енĕпе пухнă опыт çинче чарăнса тăчĕ.

Сÿтсе явнă ыйтусем тăрăх коллеги тивĕçлĕ йышăну хатĕрлерĕ.

*Ĕçлĕ калаçăва вĕçленĕ май Сергей Димитриев халăха социаллă хÿтлĕхпе тивĕçтерес енĕпе тунă çитĕнÿсемшĕн ĕçлев центрĕсен хастарĕсене Светлана Петряковăна, Галина Кисинăна, Надежда Климинăна /Шупашкар хули/ ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Хисеп хучĕпе, «Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин центрĕн чи лайăх ĕçченĕ» конкурсра çĕнтернĕ Марина Удочкинăна /Шăмăршă районĕ/, иккĕмĕш вырăн йышăннă Оксана Федоровăна /Канаш хули/, Ольга Зайцевăна /Вăрнар районĕ/, Регина Михайловăна /Шупашкар хули/, виççĕмĕш вырăна тухнă Людмила Григорьевăна /Шупашкар районĕ/, Анастасия Егоровăна /Вăрмар районĕ/, Игорь Иванова /Красноармейски районĕ/ дипломсемпе чысларĕ.*

**В.СМИРНОВА**

*Брифинг*

# Ачасем тата хăрушсăрлăх

***Ачасем пурте тенĕ пекех çулла-на чăтăмсăррăн кĕтеççĕ: хĕвеллĕ те ăшă çанталăкра шыва кĕрсе са-вăнма, тăраниччен çырла çиме, мĕн тĕттĕмлениччен урамра кул-ма-выляма, чуна килĕшекен ытти ĕçе тума пулать-çке. Анчах шăпах çуллахи вăхăтра çул çитменнисем аманасси-суранланасси ÿсет.***

Акă пĕрисем шывра путаççĕ, теприсем çÿллĕ çĕртен ÿкеççĕ, виççĕмĕшĕсем уксус йÿçекĕ е бензин ĕçсе наркăмăшланаççĕ, тăваттăмĕшĕсем çул çинчи аварие лексе вилеççĕ... Ку инкексене аслисем пепкисем тĕлĕшпе тимлĕрех пулнă тăк е пĕчĕкскерсене пĕччен хăварман тăк сирсе яма та май килнĕ. Шăпах çакăн тавра калаçрĕç ĕнер Правительство çуртĕнче йĕркеленĕ брифингра. Республикăри ГКЧС председателĕ Вениамин Петров, ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин ачасемпе амăшĕсем валли медпулăшу йĕркелессин уйрăмĕн пуçлăхĕ Нина Емельянова, РФ Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи Следстви управленийĕн ертÿçин аслă пулăшуçи Олег Дмитриев чуна çÿçентерекен тĕслĕхсемпе паллаштарчĕç.



Акă çĕртме уйăхĕн 9-мĕшĕнче икĕ ача путса вилнĕ: пĕри – Сĕнтĕрвăрри, тепри – Канаш районĕсенче. Вениамин Петров каланă тăрăх – малтанхи тĕслĕхре аслисем те юнашарах пулнă. Канаш районĕнче вара 8-10 çулсенчи виçĕ ача хăйсем çеç шыва кĕнĕ. Пĕри путма пуçласан юлташĕсем малтанлăха çухалса кайнă, кайран тин çитĕннисенчен пулăшу ыйтма чупнă, анчах кая юлнă. Кăçал çĕртме уйăхĕнче çеç 4 ача путса вилнĕ, пĕлтĕр çак тапхăрта – 1.

Çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнче Шупашкарти нумай хваттерлĕ çуртăн 10-мĕш хутĕнчен 1 çул та 10 уйăхри хĕр ача ÿксе вилнĕ. Синкер касхине пулнă. Çемье çывăрма выртиччен зала уçăлтарма шухăш тытнă, чÿречине /ăна москит сеткипе карнă/ уçнă. Ашшĕ-амăшĕ хăйсен ĕçĕсемпе кухньăна кайнă, икĕ хĕрĕ /асли 3 çулта/ пÿлĕмрех юлнă. Кĕçĕнни чÿрече янаххи çине хăпарнă та сеткăпа пĕрлех урама тухса ÿкнĕ, вилмеллех суранланнă. Республикăн Следстви управленийĕ çак факт тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. «Эпир ача çÿллĕ çĕртен ÿкнĕ пĕтĕм тĕслĕхпе мар, вăл йывăр суранланнипе е вилнипе çыхăннă фактсемпе çеç ĕçлетпĕр, вĕсенче пепкесен тĕлĕшпе преступлени сĕмĕ пурри-çуккине тĕрĕслетпĕр. Кăçал 6 факт тĕлĕшпе тĕрĕслев пуçарнă, çав шутран 2-шĕнче ача вилнĕ», – терĕ Олег Дмитриев. Вăл ашшĕ-амăшĕн чÿречене уçсан пĕчĕк ывăл-хĕрне куçран вĕçертмелле маррине аса илтерчĕ. Паллах, ачасем кăшт пысăклансан чÿречене хăйсем уçма, унтан урама тухса ÿкме пултараççĕ. Ун пекки ан пултăр тесен блокировка хатĕрĕсем вырнаçтарма сĕнчĕ О.Дмитриев.

Нина Емельянова кăçал çуллалăк пуçланнăранпа 62 ача вилнине пĕлтерчĕ, çав шутран 50% 1 çула çитеймен. «Кашни иккĕмĕш ача тулаш сăлтавсене пула çут тĕнчерен уйрăлнă: çул çинчи аварие лексе аманнăран, пушарта, шывра путса... Урамра, йăлари условисенче суранланнăран çул çитменнисем сиплев учрежденийĕсене лекеççĕ. Акă 2 çул та 7 уйăхри хĕр ача çине алăк ÿкнĕ, шел, ăна çăлса хăварма май килмен», – терĕ Нина Николаевна. Вăл Интернетпа усă куракансен хушшинче çак темăпа ыйтăм ирттерни çинчен те каласа кăтартрĕ. Унта хутшăннисен 40% çемьесенче ăнлантару ĕçне ытларах йĕркелемеллине палăртнă. 22% кÿршĕсемпе тăванĕсен, таврари çынсен те ачасемпе тимлĕрех пулмалла тесе пĕлтернĕ. «Социаллă ĕçченсен, правăна сыхлакан органсен ĕçне вăйлатмалла», «Ăнлантару ĕçне МИХсем урлă ирттермелле» хуравсем те нумай пулнă.

«Хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ! Ачăрсемпе çуллахи вăхăтра тимлĕ пулăр, вĕсене вăл е ку лару-тăрура хăйсене мĕнле тытмаллине ăнлантарăр, хăрушсăрлăх йĕркисемпе паллаштарăр», – терĕç брифинга йĕркелекенсем.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

# Йывăрлăхра нихăçан та пăрахман...

***Тахçан пĕр патшалăхра пурăннă халăхăн, каярахпа тĕрлĕ çĕр-шыва пайланнă пулин те, пĕр-пĕрне йывăрлăхра пулăшас туртăм нихăçан та иксĕлмен. Украинăри лару-тăру çивĕчленсен, унта автомат, ытти хĕçпăшал вăйĕпе влаç тытăмне «çирĕплетме» тытăнсан, мирлĕ çынсен юнĕ юхма пуçласан нумайăшĕ хÿтлĕх шыраса лăпкă тăрăхсене тухса кайнă. Çав шутра – Раççей регионĕсене те. Миграци юхăмĕпе ирĕксĕр çула тухнисен шучĕ уйăхсерен мар, эрнесерен ÿссе пырать. Пирĕн республикăна килекен те йышлă. Малтан шута илнĕ 4 пин ытла украин çынни çумне юлашки вăхăтра кăна тата 766 çынна шута илнĕ. Ытларахăшĕ – Луганск, Донецк, Николаев, Харьков облаçĕсенчен. Тăванĕсене, çуртйĕрĕпе пурлăхне аякра хăварнисене республика шайĕнче мĕнле пулăшу кÿмелли пирки канашларĕç Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ирттернĕ ĕнерхи ларура.***

– Пирĕн патăмăрта миграци ыйтăвĕ çивĕчленмен. Ку тăрăма эпир сăнасах тăратпăр. Украинăран куçса килнисен шучĕ мĕншĕн ÿсни каламасăрах паллă, – пĕлтерчĕ Федераци миграци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн пуçлăхĕ Виталий Черничкин. – Эпир куçса килнĕ кашни çынпа уйрăммăн ĕçлетпĕр, документсем хатĕрлеме пулăшатпăр, юридици ыйтăвĕсемпе консультацисем паратпăр...

Виталий Васильевич кунта куçса килнисенчен чылайăшне тăванĕсемпе çывăх çыннисем, тусĕ-юлташĕ хÿтлĕх панине каларĕ. Нумайăшĕ Украинăра лару-тăру лăплансан, хуласемпе ялсем çине бомбăсем тăкăнма пăрахсан, автомат сасси шăплансан çуралнă кĕтесе, тăван тăрăха каялла таврăнасси çинчен пĕлтернĕ. Раççейре юлас текен те сахал мар. Хальлĕхе пурин те – тарса килнĕ çын /беженец/ статусĕ. Ăна 3 çуллăха параççĕ. Кайран тăсма та пултараççĕ.

Ларура кашни ведомствăн хăйĕн профилĕпе çыхăннипе ĕçлемелли çинчен сăмах пычĕ. Республика ертÿлĕхĕ пур енлĕ пулăшу кÿме шантарчĕ. ЧР Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби акă паян тесен паянах пурăнмалли кĕтеслĕ, шалуллă 226 ĕç вырăнĕ сĕнме пултарать. Вăхăтлăх статуслисене общество ĕçĕсен пушă вырăнĕсем пурри çинчен пĕлтерчĕç.

Алла Самойлова министр ку категорири çынсене ыттисемпе танах медицина пулăшăвĕ парассине, килсĕр-çуртсăррисене кану базисен çурчĕсене, ваттисен интерначĕсене вырнаçтарма, ачасем валли хăтлă кану тата вĕренÿ вырăнĕсем тума май пуррине пĕлтерчĕ. Пулăшу кĕтекенсем валли министерство сайтĕнче ятарлă баннер вырнаçтарнă, «хĕрÿ лини» телефон номерне пĕлтернĕ. Кăсăкланакан унта пур ыйту хуравне тупма, хăйне кăсăклантараканнине хăварма пултарать.

Ларăва Украинăран тарса килнĕ Андрей Фурсовпа Евгений Кузенко хутшăнчĕç. Иккĕшĕ те унччен Харьковра пурăннă. Çамрăксене наци гвардине мобилизацилеме тытăнсан – тăван халăхне хирĕç автоматпа тухас темен, Раççее çитсе ÿкнĕ-ÿкнех. Халĕ – Çĕнĕ Шупашкарти юлташĕсем патĕнче «хăнара». Анчах Харьковра – ашшĕ-амăшĕ, мăшăрĕсем, ачи-пăчи. Андрей та, Евгений те – аслă пĕлÿллĕ, пĕри – программист, тепри – финансист. Тăванĕсене Чăваш Ене куçарса килесшĕн...

– Йывăр чухне пулăшу кирлех. Майне тупăпăр, – пĕтĕмлетрĕ ларăва Михаил Игнатьев яваплă органсене ку енĕпе пулăшма сĕнсе.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

*Лару*

# Республика кунне чыслăн кĕтсе илесчĕ

***ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Республика кунне хатĕрленсе ирттерес ыйтусемпе йĕркелÿ комитечĕн ларăвне ирттерчĕ.***

Тĕп мероприятисен юхăмĕпе ЧР Экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин паллаштарчĕ. Çĕртме уйăхĕн 19-20-мĕшĕсенче Шупашкарта иртекен VII «Раççей регионĕсем – çирĕп аталану» экономика форумне çĕр ытла хулапа региондан 450 çынна яхăн хутшăнма кăмăл тунă. Пленарлă ларăва Оперăпа балет театрĕнче, форумăн ытти мероприятине Наци библиотекинче ирттерме палăртнă. «Хальхи вăхăтра пиар-кампани пырать, ятарлă сайт туса хунă», – пĕлтерчĕ министр.

Çав кунсенчех регионсен хушшинчи XXI «Регионсем – чикĕсĕр ĕçтешлĕх» курав уçăлать. Вăл çĕнĕ технологисемпе паллаштарĕ, производительсен ĕç-хĕлне, таварсене хаклама май парĕ. Фейерверксен кăçалхи фестивалĕн теми – «Тăван культура çути». Вăл çĕртмен 23-24-мĕшĕсенче Шупашкар кÿлмекĕнче пулĕ. Унта Челябинскпа Шупашкарти, Симферопольпе ытти хулари çутă ăстисем хутшăнасси паллă.

Республика кунне халалланă культура мероприятийĕсен программи те пуян. ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов каланă тăрăх – йăлана кĕнисене çеç мар, çĕннисене те ирттерме палăртнă. Пĕтĕм Раççейри XXII «Раççей çăл куçĕсем» халăх пултарулăхĕн фестивальне Раççейри 19 регионтан 26 коллектив хутшăнма кăмăл тунă. Китайран, Италирен, Азербайджанран туссем килессине пĕлтерчĕ министр. Китаецсем «Чей церемонийĕ» куравпа паллаштарĕç. Кунсăр пуçне ют çĕршыв хănисем республикăри районсемпе хуласенче хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарĕç.

«Руç ăстисем» фестивале Культура çуллалăкне халалланă. Вăл «Раççей ăстисен искусствине – хĕвеллĕ Чăваш Ене» чĕнÿпе иртет. Раççей Федерацийĕнчи 15 субъектран 33 ăстана кĕтеççĕ. Чăваш Республикинчен 25 ăста хутшăнать. Пукане ăсталас тата тимĕр туптас енĕпе ăсталăх класĕсем ирттерме палăртнине пĕлтерчĕ министр. Çĕртмен 24-мĕшĕнче пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ иртĕ. «Пĕлтĕр йĕркеленĕ уяв çакăн йышши мероприятисем халăха чăннипех те кирлине кăтартса пачĕ», – терĕ В.Ефимов. Акатуя республика тулашĕнче, ют çĕр-шывсенче пурăнакан йăхташсем йышлăн килессине пĕлтернĕ. Севастополь хулинчи «Илем» ансамбль пĕрремĕш хут Чăваш Ен халăхне юрри-ташшипе савăнтарĕ. Кăçал ачасен Акатуйне те ирттерме палăртнă. Уйрăм лапамра вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарĕç. Çак мероприятие çамрăк ăру тăван халăх йăли-йĕркине, ăс-хакăлне пĕлсе, асра тытса ÿстĕр, манăçа ан кăларттăр тесе йĕркелеççĕ.

Республика кунĕ хуласемпе районсенче строительство объекчĕсене хута янипе те асра юлĕ. ЧР Строительство министрĕ Олег Марков каланă тăрăх – уяв кунĕнче çĕнĕ 11 объект ĕçе кĕртмелле. Çак шутра Вăрмар поселокĕнчи 20 хваттерлĕ пурăнмалли çурт, Çĕрпÿ хулинчи 240 вырăнлă ача сачĕ, Канаш районĕнчи Карăкăри спорт центрĕ, Комсомольски районĕнчи Киров поселокĕнчи фельдшерпа акушер пункчĕ, Комсомольски ялĕнчи 19 хваттерлĕ çурт т.ыт.те. «Ку объектсенче строительство ĕçĕсене вĕçленĕпе пĕрех. Тирпей-илем кÿрес, тавралăха хăтлăлатас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ», – терĕ министр.

Шупашкар уяв кунĕсенче тата та хитреленсе капăрланĕ. «Хулана хăтлăлатасси – пирĕн тĕп тĕллев, – терĕ Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов. – Наци символики тĕп вырăнта пулĕ. 21 пин тăваткал метр лаптăка чечексем йышăнĕç. Клумбăсен шучĕ ÿсĕ». Хулана çавăн пекех вырăсла тата чăвашла çырнă транспарантсемпе баннерсем уяв сĕмĕ кÿрĕç. Çавăн пекех Республика кунĕ тĕлне 73 урама юсаса çĕнетме палăртнă. «Тĕп хулари мĕн пур паркра, скверта, лапамра уяв мерпориятийĕсем иртĕç. Вĕсене йĕркелесе ирттерме Патшалăх Канашĕн, хула депутачĕсен хастар хутшăнĕç», – терĕ Л.Черкесов. Шупашкар çыннисемпе хăнисемшĕн тепĕр çĕнелĕх – çĕртмен 12-24-мĕшĕсенче иртекен чăваш апат-çимĕçĕн фестивалĕ.

Комсомольскисем те Республика кунне чыслăн кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Михаил Афанасьев каланă тăрăх – халĕ вăхăтра район центрне хăтлăлатас, çулсене юсаса çĕнетес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Уявчен «Кĕтне» спорт комплексĕ, «Хуçалăх таварĕсем» лавкка çывăхĕнчи автостоянкăсене туса пĕтересшĕн, культурăпа кану паркĕ тавра тата тытса çавăрасшăн. «Уяв мероприятийĕсен программи хатĕр, вăл нумай енлĕ, çавна май пуриншĕн те кăсăклă пулассăн туйăнать, – терĕ Михаил Романович. – Куравсем, вырăнти пултарулăх ушкăнĕсен концерчĕсене йĕркелеме палăртнă. Тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕ иртĕ».

Республика кунĕччен – çĕртмен 24-мĕшĕччен – вăхăт нумай юлмарĕ. Яваплă çынсем уява хатĕрленсе пурнăçланă ĕç-хĕлпе паллаштарчĕç, палăртнин пысăк пайне пурнăçа кĕртнине пĕлтерчĕç. Çав вăхăтрах вĕçне çитерейменни те çук мар. Сăмахран, Шупашкарти Мускав кĕперĕ çинче юсав ĕçĕсем халĕ те пыраççĕ-ха. «Хăнасем çĕртмен 18-мĕшĕнчех Шупашкара килме пуçлаççĕ. Унччен палăртнине вĕçлеме ĕлкĕресчĕ. Унсăрăн хамăра та, хăнасене те кансĕр пулĕ», – терĕ премьер-министр. Вăл çавăн пекех И.Яковлев проспектĕнчи лару-тăру ыйтусем çуратнине палăртрĕ. Ку лаптăкра та ĕçсене хăвăртлатма, проектра палăртнинчен пăрăнмасăр ĕçлеме хушрĕ.

■ **В.БАГАДЕРОВА**

*Çанталăк*

# Кĕтнĕ çумăр тинех çурĕ!

Чăвашгидрометеоцентр директорĕ Сергей Максимов ĕнер редакцие çапла пĕлтерчĕ: «Федераци учрежденийĕн çанталăка сăнакан Пăрачкав тăрăхĕнчи специалисчĕ çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен тата каçхине, сăнанă вырăнсенче – 22 мм, Улатăр районĕнчи çавнашкал лаптăксенче – 10 мм, Канаш районĕнче 0,5 мм çумăр çунине палăртнă. Шупашкар хулипе Патăрьел районĕнче нӳрĕк питĕ сахал ӳкнĕ. Иртнĕ тунти кун, çĕрле, Шупашкарта – 5 мм, Улатăр тăрăхĕнче – 2 мм, Канаш енре 0,7 мм çунă. Пăрачкав районĕнче çумăр пулман. Çак кунсенче сывлăш температури кунсерен пĕчĕкленет. Çĕртмен 12-мĕшĕнче кăнтăрла – 14-19, çĕрле 8-13 градус ăшă пулать. Районĕ-районĕпе тӳпене пĕлĕт хупăрлать, вырăн-вырăнпа çумăр çăвать».

«Иртнĕ вырсарни кун, 15 сехетре, Пăрачкав ялĕнче, Октябрьски, Никулино, ытти ял тăрăхĕнче аслатиллĕ çумăр çуса савăнтарчĕ, – хыпарларĕ телефонпа райадминистрацин ял хуçалăх пайĕн ертӳçин çумĕ Валентина Вдовкина. – Йăлтăр-ялтăр çиçĕм çиçрĕ. Ял хуçалăх культурисене нӳрĕк парнелерĕ, уçă сывлăш самантрах таврана уçăлтарчĕ. 19-20 сехетсенче хура пĕлĕтсем каллех район еннелле капланса килчĕç те – ăшă çумăр чашлаттарчĕ! Ӳсентăран пĕр эрнелĕхе нӳрĕк илчĕ. Çапах та унăн шайĕ чылай хуçалăхра нормăпа пăхнă чухлĕ мар».

Улатăр райадминистрацийĕн çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн уйрăмĕн ертӳçи Николай Фатеев районта çумăр сахал çунине çирĕплетрĕ.

«Вырсарни кун Ершепуç, Кульцав, Хирпуç, Çĕрпел, Санарпуç, Калинино ял тăрăхĕсенче нӳрĕк ӳкрĕ, – хавасланса калаçрĕ телефонпа Вăрнар райадминистрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Вячеслав Горбунов. – Чăн та, районăн çурçĕр пайĕнче сахалрах çунă».

Владимир Семенов, Етĕрне райадминистрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ: «Иртнĕ эрне кун Етĕрнепе Советски ял тăрăхĕсенче, вырсарни кун Урпашпа Мăн Чураш ял тăрăхĕсенче, хăш-пĕр вырăнта пăрлă çумăр хашлаттарчĕ. Ытти ял тăрăхĕнче çуман».

Хĕрлĕ Чутай райадминистрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Владимир Хромов вырсарни кун район урлă хура пĕлĕтсем хăвăрт иртнине, шел те, нӳрĕк кăльт çеç ӳкнине пĕлтерчĕ.

Çĕртмен 9-мĕшĕнче, çĕрле, республикăри чылай ял тăрăхĕнче çумăр çунă. Йĕпреç райадминистрацийĕн специалисчĕ Дина Иванова пĕлтернĕ тăрăх – пĕр çĕрте нӳрĕк аванах ӳкнĕ, тепринче, вăл шутра Йĕпреç таврашĕнче, çумăр питĕ сахал çунă.

Елчĕкпе Комсомольски райадминистрацийĕсен ял хуçалăх пайĕсен ертӳçисем Петр Тремасовпа Илдус Минетуллин тата Шăмăршă райадминистрацийĕн специалисчĕ Виталий Давыдов çак районсенче çумăр пач çуманнине, Патăрьел райадминистрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Мансур Калмыков кăшт çеç çунине çирĕплетрĕç, çумăр кĕтнине пытармарĕç. Тăпран ӳсен-тăран тымарĕ патĕнчи сийĕ нӳрĕксĕр юлнăран ял хуçалăх культурисем çитĕнейменнине палăртрĕç. Çапах та кашни районти ял ĕçченĕсем çак кунсенче çумăр кĕтсе илессе шанаççĕ.



■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

*Пăтăрмах*

# Мускав кĕперĕ хупă!

***Сăмах çĕр-шывăн тĕп хулинчи мар, Шупашкарти Мускав кĕперĕ пирки. Ĕнер ирхинех кĕпер урлă иртме тивнĕ автомобилистсем унта пĕчĕк кăна шăтăк пурри пирки калатчĕç. Каç кӳлĕм вара…***



Мускав кĕперĕн хулан çурçĕр хĕвел анăç енчи пĕр сыпăкĕ йĕтăнса аннă – самай пысăк шăтăк */сăн ӳкерчĕкре/.* Кĕпер çинче юсав ĕçĕсем пынă май 4 йĕртен иккĕшне ахаль те хупнăччĕ, халĕ вара Шупашкарăн икĕ пайне çыхăнтаракан пысăк пĕлтерĕшлĕ транспорт артерийĕ вуçех хупăннă, ахаль транспорт кăна мар, пассажирсене илсе çӳрекенни те çӳреймест.

Тĕп хула администрацийĕ кĕпере хупнине юсав ĕçĕсемпе сăлтавлать. Мэри пĕлтернĕ тăрăх – тунти кунпа ытлари кун хушшинчи çĕрле çумăр çунă май шыв кĕпер вĕçĕнчи хăйăра юхтарнă. Çакă кĕперĕн деформаци çĕввисене юсамашкăн асфальтăн Мускав районĕ енчи пĕр лаптăкне сирнипе сăлтавланнă. Шыв юхтарнă хăйăра ирех залив çыранĕ çинчен хырса илнĕ, «Мостотрест» тытăмĕнчи «Мостоотряд-41» рабочийĕсен бригади çул айне хăйăр тултарма пуçланă...

Анчах тултарса ĕлкĕреймен пулас. Кăнтăрла хыççăнхи самай вăйлă çумăр та, тен, хăйĕн киревсĕр ĕçне тунă пуль. Пăтăрмах хула влаçĕсемшĕн те кĕтменлĕх пулни куç кĕрет. Пирĕн корреспондентсем ĕнер хайхи шăтăк патĕнче тĕп хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков строительсемпе кăмăлсăрланса калаçнине асăрханă.

Хальлĕхе çул çӳреве ытти çулрампа йĕркеленĕ. Анчах транспорт юхăмĕ мĕнлерех пысăк та – Шупашкарта ахаль те чăрмавлă çул çӳрев пĕр вăхăт автомобилистсемшĕн те, ахаль çынсемшĕн те пушшех нушаллă пуласси куç кĕрет. Влаçсем кĕпере хăçан уçасси пирки татăклăн каламаççĕ. Çакă çеç лăпкăлăх кӳрет: специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх – кĕперĕн йывăрăша тӳсессипе çыхăннă пахалăхĕ сиенленменмĕн.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

# Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче кăларнă 82-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин аталанăвĕшĕн нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар районĕнчи «Чебоксарскагропромтехсервис» производство фирми» акционерсен хупă обществин генеральнăй директорне **Александр Вениаминович БОРОДАВИНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМĔНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН»** орден медальне наградăланă;

ĕçри çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Республикăн клиника больници» бюджет учрежденийĕн уйрăм заведующине **Александр Васильевич КРОТОВА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Вăрнар районĕнчи «Санар» агрофирма» тулли мар яваплă общество трактористне **Владимир Порфирьевич КРИПЧАКОВА – «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ МЕХАНИЗАТОРĔ»,** «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ» тулли мар яваплă обществăн цех пуçлăхне **Елена Ивановна ВАСИЛЬЕВĂНА,** Тăвай районĕнчи «Аккондагро» фирма» акционерсен хупă обществин водительне **Николай Иванович ИВАНОВА,** «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ» тулли мар яваплă обществăн производство пуçлăхне **Татьяна Витальевна МИХАЙЛОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЯЛ ХУÇАЛĂХĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ятсем панă;

сывлăх сыхлавĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Федерацин потребительсен прависене хӳтĕлессин тата этем ырлăхĕн сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçин çумне **Елена Геннадиевна ПРОКОПЬЕВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН СЫВЛĂХ СЫХЛАВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

халăхăн социаллă хӳтлĕхĕ енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Шупашкар хулинчи халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комплекслă центр» бюджет учрежденийĕн уйрăм заведующине **Елена Ивановна ПАВЛОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХĂН СОЦИАЛЛĂ ХӲТЛĔХĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

вырăнти хăй тытăмлăх аталанăвне хăйĕн тӳпине хывнăшăн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мăн Этмен ял тăрăхĕн администрацийĕн тĕп специалист-экспертне **Галина Ивановна ФОНДЕРКИНĂНА,** Вăрмар район администрацийĕн информаци пайĕн пуçлăхне **Александр Михайлович ЧЕРНОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНĔСЕНЧИ ЛАЙĂХ СЛУЖБĂШĂН»** паллăпа наградăланă.

# Аçа çапнă

Тунти кун кăнтăрла хыççăн 14 сехет çурă тĕлнелле Шупашкар районĕн право хуралĕн органĕсене усал хыпар çитнĕ: Томаккасси ялĕ çывăхĕнче аслати вăхăтĕнче çынна аçа çапнă-мĕн. Çак ялта пурăнакан 58 çулти хĕрарăмăн, çав кун ĕне кĕтĕвне кĕтнĕскерĕн, пурнăçĕ татăлнă.

Следстви комитечĕн Çĕнĕ Шупашкарти пайĕ ку тĕслĕхпе следстви умĕнхи тĕрĕслев пуçарнă. Чăнласах аçа çапнипе вилнĕ-и – тĕпчев çав ыйтăва татăклăн хуравлама тивĕç. Çак тĕллевпе судпа медицина экспертизи ирттерессĕ.

**К.НИКОЛАЕВ.**

# Шăпчăксене шутланă

***Кăçал Чăваш Ен пĕрремĕш хут Пĕтĕм Раççейри "Шăпчăк каçĕсем – 2014" акцие хутшăнчĕ. Республикăра акци пуçаруçи – Чăваш наци музейĕ.***

Мускавра шăпчăксене 2000 çултанпа шутлаççĕ. Раççей тĕп хулинче çак акци йăлана кĕнĕ мероприятисен шутĕнче. Кăçал вăл сарăлса анлăланнă: Раççейри 30 хулара иртнĕ.

Малтан мероприятие Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисем çеç хутшăнассине пĕлтернĕ. Каярахпа вара шăпчăксене Улатăрта, Çĕмĕрлере, Вăрмар, Канаш, Комсомольски, Йĕпреç, Патăрьел районĕсенче шутлама кăмăл тунине пĕлтернĕ. Чăваш Енрен акцие 50 ытла çын хутшăннă. Уйрăмах районсенчи шкулсенчи педагогсемпе ачасем хастарлăхпа палăрнă. Çапла вара карттă çинче Чăваш Республикинче 180 вырăнта шăпчăксене тĕл пулнине палăртнă.

**В.ДАНИЛОВА.**

# Пĕчĕк ӳнерçĕ – конкурс çĕнтерӳçи

***Çак кунсенче Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов Э.Юрьев ячĕллĕ ачапăча художество шкулĕнче вĕренекен Лена Яковлева патне хăнана кайнă. Мĕншĕн? Сăлтавĕ пулнах.***

Пĕчĕк ӳнерçĕ регионсен хушшинчи «Раççейри сывă хуласем» пултарулăх конкурсĕнче çĕнтернĕ. Çулсерен иртекен конкурса Вологда облаçĕнчи Череповец хула мэрийĕпе çав тăрăхри 1-мĕш художество шкулĕ йĕркелет. Унăн тĕллевĕ – хулара пурăнакансене сывă пурнăç йĕркине пăхăнма вĕрентесси, тăван кĕтес пурнăçне лайăхлатасси, хула тавралăхне хăтлăлатасси. Жюри членĕсем пирĕн ентешĕн «Çĕнĕ хула сăррисем» ĕçне пысăк хак панă. Çĕнтерӳçĕ тата унăн вĕрентекенĕ Валентина Черненкова дипломсене тивĕçнĕ. Тĕл пулура Шупашкар хула пуçлăхĕ шкул ачипе педагога парнесемпе чысланă.

**Е.АНДРЕЕВ.**



# ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

Ятарлă кăларăм

*Çивĕч ыйту*

## Хальлĕхе тӳнтерле ӳкерчĕк

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче ĕçлекенсене канăç паман ыйту паян кашни утăмрах тупăнса тăрать. Вĕсен умĕнчен куçа хупса ниепле те иртсе кайма çук. Çавăн пек ыйтусенчен пĕри вăл – халăх йышлăн пурăнакан вырăнсене йăлара усă курнă хыççăн юлакан каяшсемпе тултарса лартни. «Халĕ ăçта тасатсах тăраççĕ, çавăнта çӳп-çап пырса тăкаççĕ» текен шӳтлĕ каларăш та çӳрет Йĕпреç тăрăхĕнче. «Çав каяша ятарлă çырмана турттарса кайса тăкассишĕн эпир яваплă, – тет Йĕпреç районĕнчи муниципалитетăн «Водоканал» унитари предприятийĕн директорĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Сергей Павлов. – Ку ыйту чи çивĕччи пулса тăчĕ. Кашни кунах ирттерекен планеркăна çавăнтан пуçлатпăр та унпах вĕçлетпĕр. Лару-тăру вара лайăх енне питех улшăнасшăн мар. Аптранă енне: «Ку предприятие ăнсăртран килсе лекмерĕм-ши?» тесе те пăхатăп...»

Пытармасăр каласан кунашкал иккĕленӳллĕ шухăш тытмалла мар ĕнтĕ Сергей Григорьевичăн. Ăна директор пуканне шанса париччен вăл кунта тĕп инженер тивĕçне пурнăçланă, унччен тăватă çул Хĕр юхан шывĕ çинче тунă шыв управĕн тасату сооруженийĕн пуçлăхĕ пулнă.

Йăлари таса марлăха турттарса тухас ыйту Сергей Павловччен директор пулнă çынсене те канăç паман. Шел, вĕсем те кирлĕ пек татса пама вăй-хал çитереймен ăна. Тăватă çул хушшинче «Водоканалта» тăватă пуçлăх улшăннă. Сергей Григорьевич – предприяти ĕçлеме пуçланăранпа улшăннă пиллĕкмĕш пуçлăх.

«Юлашки вăхăтра кирек ăçталла пăхсан та – унта та кунта çӳп-çап тултарнă михĕсем ларнине куратăн, – кăмăлсăр туйăмпа калаçăва тăсрĕ Сергей Павлов. – Ку предприяти хăйĕн тивĕçне вĕçне çитериччен пурнăçласа пыраймасть иккен», – теме те пăхĕç хăшĕсем. Ара, «куçа тăрăнаççĕ-çке» урам тăваткалĕсенче, çул-йĕр хĕрринче, ял-поселоксене пырса кĕнĕ çĕрте вырăн тупакан михĕсем. Ытларах камсем лартса хăвараççĕ вĕсене? Уйрăм кил-çуртсенче пурăнакан, анчах çӳп-çап турттарса кайнăшăн нухрат тӳлессинчен пăрăнакан çынсен ĕçĕ ку. Вĕсен тăрăшулăхĕпех çĕнĕ купасем çуралаççĕ.

Райцентрти нумай хваттерлĕ çуртсен çывăхне пушатнă контейнерсене лартса хăваратпăр кăна, тепĕр ирччен вĕсем тĕрлĕ ăпăр-тапăрпа тулса лараççĕ.

Вырăнти çынсем çӳп-çап тăкса хăварма ĕлкĕриччен çывăхри уйрăм çуртсен хуçисем тултарса та лартаççĕ вĕсене. Ку «меслет» меллĕ: никам та курман, укçа та тӳлес çук. Пирĕнпе шанчăклă çыхăну тытассинчен айккине тăрса юлакансем çакна каçхине, çынсем çывăрма выртсан тăваççĕ. Кун пирки пире шăнкăравласа пĕлтерекенсем пур, анчах тытман вăрă – вăрă мар-çке. Хальлĕхе вара граждансен хушшинче ăнлантаруллă калаçу ирттернипех çырлахатпăр».

Йăлари хытă каяшсене кирлĕ çĕре турттарса кайса вырнаçтарассине вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене шаннă. Анчах вĕсем те нимĕн те тăваймаççĕ, тĕп сăлтавне укçа çукки çине яраççĕ. Пирĕн шухăшпа, ял тăрăхĕсенче те, Йĕпреç хула тăрăхĕнче те çирĕплетнĕ план, унпа килĕшӳллĕн территорисене тасатнăшăн, тирпейилем кӳнĕшĕн илмелли укçа-тенкĕ тарифĕсемпе стандарчĕсене палăртни вырăнлă пулмалла. Пучинке ял тăрăхĕнче шăпах çапла тăваççĕ те.

Калаçăва «Водоканал» МУПăн тĕп бухгалтерĕ Инна Мараховская хутшăнчĕ. «Пирĕн предприяти те укçа-тенкĕ енчен пысăк йывăрлăхра, – терĕ вăл. – Кассăна нухратпа пуянлатса тăрасси тĕрлĕ чăрмавпа çыхăннă. Вĕсенчен пĕри – районти предприятисемпе организацисем, тĕрлĕ меслете тĕпе хурса ĕçлекен хуçалăхсем хăйсене паракан пулăшусемшĕн пире вăхăтра укçа куçараймanни. Акă «Управляющая компания» ООО 1 млн тенкĕлĕх парăмра. Уйрăм кил-çуртсенче пурăнакансен парăмĕ те 1 млн та 250 пин тенкĕрен иртсе кайнă. Тӳлеме «маннисен» хушшинче çавăн пекех Буинскпа Хурамал ял тăрăхĕсенчи граждансем, Йĕпреçри «Патвар» спорт комплексĕ, «Йĕпреçри йывăç япаласен комбиначĕ» ООО».

Ку енĕпе вара Пучинкепе Эйпеç тата Ирçе Çармăс ял тăрăхĕсем пуçаруллă. «Водоканал» МУПăн йăлари хытă каяшсене турттарассишĕн яваплă Галина Абрамова мастер каланă тăрăх – кашни çыннăн хăй пурăнакан тăрăх таса та типтерлĕ пултăр, çавна май ăçта килнĕ унта çӳп-çап йăваланса ан выртиăр тесе тимлемелле те. Шел те, паянхи куна илсен, йĕркесĕрлĕхпе «çапăçаканĕсем» «Водоканал» ĕçченĕсем кăна. Таса мар кăмăл-туйăмлă çынсем хăйсемех каяшсен куписем ӳссе пынăшăн район, ял-хула тăрăхĕсен администрацийĕсене те, район прокуратурине те шăнкăравласах тăраççĕ. Пурте пĕрпĕрне пулăшса тата ăнланса ĕçлесен кăна тивĕçлĕ йĕрке тума май пулĕ. Хальлĕхе вара Йĕпреç тăрăхĕнче тӳнтерле ӳкерчĕк.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

*Пушар хăрушсăрлăхĕ*

## Тĕрĕслевсем тата профилактика

***Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче надзор управленийĕсем тĕрлĕ тĕрĕслев ирттереççĕ. Вĕсенчен ытларах пайĕ – малтанах планпа палăртса хунисем. Пушар хăрушсăрлăхĕн мерисене епле пурнăçласа пынине тĕрĕслес тĕллевпе йĕркеленĕ мероприятисем мĕн кăтартса параççĕ-ха? Вут-çулăм алхасасси хăш районхулара ӳснĕ? Вăрман пушарĕнчен хӳтĕленес тĕллевпе мĕн тăваççĕ вĕсем? Çак ыйтусене Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ – надзор ĕçĕ-хĕлĕн управленийĕн пуçлăхĕ, шалти служба полковникĕ Николай ПЕТРОВ хуравлать.***

– Чи малтанах федерацин «Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен» ФЗ-131 №-лĕ саккунĕн 77 статйине кĕртнĕ улшăнусемпе килĕшӳллĕн кăçалхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕлĕшпе ирттермелли тĕрĕслевсен, малтанах планланисен, тăтăшлăхĕ урăхланнине палăртас килет. Халĕ çакнашкал мероприятисене икĕ çулта пĕрререн ытла мар ирттерме юрать, малтан вара пилĕк çулта пĕрререн ытла юраман, **– терĕ Николай Валерьянович.** – Раççей МЧСĕн ертӳлĕхĕн йышăнăвĕпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тĕлĕшпе пирĕн управлени 2014 çулта пĕр тĕрĕслев те ирттерме палăртман.

**– Планпа пăхман тĕрĕслевсене мĕнле сăлтавсемпе ирттерме юрать?**

– Граждансемпе юридици сăпачĕсенчен, патшалăх органĕсенчен саккуна пăсни çинчен калакан фактсем пирки – енчен те вĕсене пула синкер пулма, çынсен сывлăхĕпе пурнăçĕшĕн хăрушлăх тухса тăма пултарать тăк – çыру е информаци çитсен; çапах малтан РФ субъекчĕн прокуратурипе килĕшсе татăлмалла. Унсăр пуçне маларах палăртса хуман тĕрĕслевсене РФ Президенчĕн, Правительствин хушăвĕпе, РФ генеральнăй прокурорĕ тата субъект прокурорĕ ыйтнипе – прокуратурăна килнĕ материалсемпе ыйтусем тăрăх – ирттермелле. Тĕслĕхрен, кăçал ака уйăхĕнче РФ Правительствин Председателĕн çумĕн хушăвне тĕпе хурса Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн надзор органĕсем ял-хула тăрăхĕсене – территорийĕнче вăрман пушарĕ куçма пултаракан ял-поселок пуррисене – вырăна кайса тĕрĕслерĕç. Паллах, çитменлĕхсем те тупса палăртнă: ял-хулапа вăрман лаптăкĕ хушшинче пушара хирĕçле чикĕ тата минерал хушă çукки е ăна кирлĕ пек туманни /Улатăр районĕнчи Соловьевский, Вăрнар поселокĕ, Йĕпреç районĕнчи Çăкалăх ялĕ тата Мирный поселок/, пушар техники чăрмавсăр иртсе çӳрессине тивĕçтересси /Патăрьел районĕнчи Пăлапуç Пашьел/. Çак ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене предписанисем панă, вĕсене нимĕнле штраф та тӳлеттермен, асăрхаттарнипех çырлахнă.

**– Ял тăрăхĕсем çак предписанисене вăхăтра пурнăçлаççĕ-и?**

– Халĕ вăйра тăракан саккунпа килĕшӳллĕн патшалăх пушар надзорĕн органĕсен предписанийĕсем – обязательнăй мелпе пурнăçламалли документсем. Шел, ку ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслеме ирĕк çук пирĕн. Планламан тĕрĕслевсене ирттермелли сăлтавсен хушшинче те маларах панă предписанисене мĕнле пурнăçа кĕртнине сăнаса тăрасси çук.Тĕп управлени ку енĕпе ЧР прокуратурине пĕрре мар çырупа тухрĕ, шел, вăл асăннă пуçарăва çул памарĕ. Çакна пулах паянхи кун предписанисене пурнăçа кĕртмелли вăхăчĕ иртсе кайнă ял тăрăхĕсене тĕрĕслеймесtпĕр: Патăрьел районĕнчи Тутар Сăкăчĕ, Красноармейски районĕнчи Алманч, Мăн Шетмĕ, Еншик Чуллă, Красноармейски, Кĕçĕн Шетмĕ, Вăрмар районĕнчи Кĕтеснер, Чулкаç, Элĕк районĕнчи Шĕмшеш, Йĕпреç районĕнчи Ирçе Çармăс, Çĕрпӳ районĕнчи Апакасси, Чиричкасси, Чурачăк, Улатăр районĕнчи Кире ял тăрăхĕсене. Çакă, паллах, ял-поселока, çынсене, пурлăха вут-кăвартан сыхлассин шайне япăх витĕм кӳрет. Маларах панă предписанисене пурнăça кĕртменни пушарсен шутне ӳстерет. Акă Çĕрпӳ районĕнчи Апакасси, Красноармейски районĕнчи Мăн Шетмĕ, Еншик Чуллă ял тăрăхĕсенче пушар тухасси кăçал 100% ӳснĕ. Вырăнти влаç хăйне шанса панă территорире пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркине çирĕп пăхăнасса шанас килет.

**– Вулакансене хăш-пĕр цифрăпа паллаштарсан аванччĕ. Унсăр пуçне «хĕрлĕ автан» хăш районсенче ытларах «ташлать»?**

– Кăçал пирĕн республикăра 421 пушар тухнă /çу уйăхĕн 30-мĕшĕ тĕлне/. Ку вăл пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан 1% сахалрах. 50 çын вилнĕ /ӳсĕм – 14%/, çав шутра 5-шĕ – ача /5 хут ытларах/. 55-ĕн суранланнă /ӳсĕм – 67%/. Вут-çулăм алхасасси çак районсенче ӳснĕ: Вăрнар /50%/, Йĕпреç /25%/, Канаш /20%/, Хĕрлĕ Чутай /50%/, Шупашкар /3%/, Шăмăршă /25%/, Етĕрне /39%/, çавăн пекех Шупашкарпа /7%/ Çĕнĕ Шупашкар /77%/ хулисенче. Пурăнмалли секторта тухакан пушарсем уйрăмах шухăшлаттараççĕ, унта 321 инкек тухнă /пĕтĕмĕшле шутран 76%/, вĕсенче 49 çын вилнĕ.

**– Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен пушар хăрушсăрлăхĕн мерисене пурнăçлас тĕллевпе чи малтан мĕн тумалла?**

– Ирĕклĕ пушар хуралĕ йĕркелемешкĕн, пĕве-кӳлĕрен, шыв башнинчен, ытти çĕртен çулталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те шыв илме май пултăр тесе условисем тумалла. Территорисене пушар сӳнтермелли малтанхи хатĕрсемпе тивĕçтермелле, инкек пулас тăк çакăн пирки халăха тата пушарпа кĕрешекен патшалăх службине пĕлтермешкĕн мерăсем йышăнмалла. Хăрушсăрлăхпа çыхăннă мероприятисене ял-хула тăрăхĕсен территорийĕсен аталанăвĕн планĕсене, схемисемпе программисене кĕртмелле. Паллах, çак ĕçсене пурнăçламашкăн та укçа-тенкĕ кирлĕ. Пушар хăрушсăрлăхĕн мероприятийĕсем валли кĕмĕл уйăрасси кăçал Патăрьел, Канаш, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Шупашкар, Етĕрне, Елчĕк, Тăвай районĕсенче тата Çĕмĕрле хулинче чакнă.

Юлашкинчен çакна палăртса хăварас килет: хальхи вăхăтра надзор органĕсем профилактика ĕçне ытларах ирттерме тăрăшаççĕ: инструктажсем, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле халăх валли ăнлантару йĕркелеççĕ, çивĕч ыйтусене МИХсенче çутатаççĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

● ➡ *6,11,12 стр.*

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ

*Çыру йĕрĕпе*

# Кӳренсе тата кӳрентерсе пурăнар мар

Мана, ку тăрăха пуçласа килнĕскере, урамсен тасалăхĕпе тирпейлĕхĕ, хытă сийлĕ çулсем, капмар та хăтлă çуртсем, симĕс тавралăх, уйрăмах çынсен уçă кăмăлĕ, тараватлăхĕ тĕлĕнтерчĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ кунти пулăхлă çĕр çинче маттур та пултаруллă вун-вун çын çуралса ӳснĕ. Уй-хирте, çар ĕçĕнче, ăслăлăхра, культурăра, ытти отрасльпе сферăра палăрнă вĕсем. Аслă Çĕрпӳелсем хăйсен ентешĕсемпе чăннипех мăнаçланма пултараççĕ. Л.Акчурин, акă, 1971 çулта Социализм Ĕçĕн Геройĕ, РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ механизаторĕ ятсене тивĕçнĕ, СССР Аслă Канашĕн депутачĕ пулнă. В.Разумов – тинĕс çар флочĕн инженерĕ, вице-адмирал. В.Арсентьев – ЧР ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, СССР Аслă Канашĕн депутачĕ. Сумлă çынсен ретĕнче РСФСР Аслă Канашĕн депутачĕн тивĕçĕсене пурнăçланă В.Белинова, Ленин орденĕпе наградăланă А.Ефимова, Н.Козлов, А.Никитина, РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ механизаторĕ Н.Кольцов. Ăслăлăха пысăк тӳпе хывнă В.Любимов, Г.Огурцов, Г.Смирнов, Н.Порфирьев, С.Аксаков, А.Захаров ăсчахсене ырăпа асăнмасăр хăвараймăн. Августин Антонов 28 çул ытла Таджик ССРĕн финанс министрĕн пĕрремĕш çумĕнче тăрăшнă. Кашкăр Микули, сăвăç тата фольклор ăсти, литературăра палăрнă. Культурăпа сцена ăстисене асăнас тăк, вĕсем – РФ тата ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ А.Чернов профессор. Пĕр хушаматлă З.А.-па Р.А.Козловăсем, йĕкĕрешсем, хăйсен пурнăçне тăван халăхăмăрăн искусствине халалланă: Зинаида Алексеевна – «Уяв» халăх ансамблĕн ертӳçи, ЧПУ доценчĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Роза Алексеевна – РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, хормейстер. Камчаткăра пурăннă. Сумлă, ĕçченлĕхĕпе, хастарлăхĕпе палăрнă Çĕрпӳелсене, Йăвашкелсене татах асăнма пулать.

Кунти ялсен историйĕ те пуян. Виçĕ çул каялла халăх пĕрле пухăнса Аслă Çĕрпӳелпе Кĕçĕн Çĕрпӳел йĕркеленнĕренпе 410 çул çитнине чыслăн уявланă.

Ял тăрăхĕ пилĕк яла пĕрлештерет: халĕ çеç асăннисемсĕр пуçне – Йăвашкел, Тутар Йăвашкел тата Хирти Шăхасан. Халăх йышĕ те пĕчĕк мар – 2 пине яхăн, 556 хуçалăх. Ял тăрăхĕн территорийĕнче икĕ ял хуçалăх предприятийĕ тыр-пул çитĕнтерет, аш-пăш, сĕт туса илет. «Çĕрпӳелти кирпĕч завочĕ» АХО строительствăра питех те кирлĕ паха продукципе тивĕçтерет. Кĕçĕн Çĕрпӳелти вăтам шкулта 230 вĕренекен ăс пухать, 25 вырăнлă ача сачĕ, аптека, икĕ культура çурчĕ, пĕр клуб, перекет банкĕн филиалĕ, почта уйрăмĕ пур. 2006 çулта участокри больницăн кунта пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисне уçнă. Çак пысăк хуçалăхăн «тилхепине» 25 çула яхăн Геннадий Ракчеев ăнăçлă тытса пырать. Сăмах май, Геннадий Герольдовичăн ашшĕ те, тăванĕсем те влаç тытăмĕнче нумай çул тăрăшнă. Аслăрах ӳсĕмрисем 1937-1953 çулсенчи политика репрессийĕнче шар курнă. Каярахпа вĕсен таса ячĕсене тавăрнă.

Статья пуçламăшĕнче мана кунти тасалăхпа тирпейлĕх тата тараватлăх тĕлĕнтернине пытармарăм. Аслă Çĕрпӳелсене вара – эпĕ мĕн çăмăлпа çӳренин сăлтавĕ. Редакцие хальтерех çак ялти Вениамин Северовран çитнĕ пăшăрханулла çыру çула тухма хистерĕ. Автор ял тăрăхĕнче ирттернĕ отчетлă пухусене тишкернĕ май сăмаха ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕç-хĕлне хак парасси çине куçарса пырать. Унăн шухăшĕпе, Геннадий Ракчеев пĕр вырăнта нумай çул ĕçленипе пуçарулăхĕпе хастарлăхне çухатнă имĕш. «Ыйтусене вăхăтра татса памасть, хăйĕн ĕмĕрĕнче йывăç-тĕм лартса курнă-ши? – çапла çирĕплетет автор. Унтан ыттишĕн ӳпкелеме пикенет. – Стадион та вăтăр ытла çул йывăç-тĕмсĕр. Ял урамĕнчи йывăççене касма пуçларăмăр. Икĕ çул каялла пушар каланчи çывăхĕнче 0,25 га çинче «Сывлăх паркĕ» чĕртме сĕнтĕм, проектне хамах хатĕрлерĕм. Карта тытмалли материал, лартмалли хыр вуллисем пирки калаçса татăлнăччĕ. Парка пĕччененех лартса хăвартăм. Унта ĕçленĕшĕн паян та татăлаймарăм-ха...»

Вениамин Васильевич çавăн пекех пралуклă радио «калаçма» чарăнсан ултă метрлă пусма йăтса çӳресе хальхи вăхăтра никама та кирлĕ мар пулса тăнă çав пралука сетка-рабица çыхма пĕччен сӳтсе çӳрени, карта тытма 300 метра яхăн рабица çыхни, ялти тĕп урама 20 çула яхăн каялла пушарта çуннă çурт кăшкарĕ илемсĕрлетсе ларни тата ытти çинчен çырса пĕлтерет. Çырăва автор «Çĕнĕ çул умĕн хамăрпа кӳршĕллĕ Хирти Сĕнтĕр ял тăрăхĕн ĕç-хĕлĕ пирки çырнă статьяна вуланă хыççăн шухăша путрăм. Кӳршĕллĕ çеç пурăнатпăр пулсан та – çĕрпе пĕлĕт пек уйрăмлăх...» сăмахсемпе вĕçлет.

Аслă Çĕрпӳеле çитсен чи малтанах халăхпа курнăçма тĕв турăм. Мĕншĕн тесен унăн куçĕ тĕлĕнчен нимĕн те ахаль иртмест. Тата ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕç-хĕлне мĕнле хаклани кăсăклантарчĕ. Тӳрех палăртса хăварам: япăх калакан питĕ сахал пулчĕ. Урамра тĕл пулнă уйрăм çынсемпе лавкка умĕнчи курнăçнă хĕрарăмсен ушкăнĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕçĕпе кăмăллă: «Çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарать. Хастар, тăрăшуллă. Ахальтен пуçлăха суйламарăмăр ĕнтĕ...» «Хăйĕн тивĕçне «4» паллăлăх пурнăçлать», – текен те тупăнчĕ. Те шӳтлерĕ, те чăнах çаплах хаклать.

Çыру тексчĕпе паллаштарсан Геннадий Герольдович тĕлĕнмерĕ. Хирĕç тăруллă самант темиçе çул каяллах çуралнă иккен. Килпетсĕр тăсăмĕ паянхи кунччченех тăсăлать авă. «Тăшман» çинчен чылай чухне япăх калаканччĕ, анчах Геннадий Ракчеев Вениамин Северов пирки ытларах ыррине асăнчĕ: чăннипех çут çанталăк тусĕ иккен, хăйĕн пуçарăвĕпе çӳлерех асăннă «Сывлăх паркĕнче» йывăç-тĕм лартма тытăннă, ăна хăйĕн хĕрĕн ятне панă. Анчах пĕтĕмпех пĕччен ĕçлемен, шкулта вĕренекенсем те пулăшнă, ял тăрăхĕ лартмалли йывăç-тĕмпе тивĕçтернĕ. Унта ĕçленĕшĕн, ял тăрăхĕн бюджетĕнче ку тĕллевпе ятарласа укçа уйăрманран, Г.Ракчеев сĕннипе пĕр предприниматель-спонсор пулăшăвĕпе шалу тӳленĕ. Стадион мĕншĕн йывăç-тĕмсĕр пулнине те уçăмлатрĕ. Ăна темиçе çул каяллах проектантсем хатĕрлесе панă, ешĕллентерес тĕк стадион лаптăкĕ тӳрех хĕсĕнме тытăнать. Тĕп урамри çуннă пӳрт кăшкарне сӳтме темиçе хут та сĕннĕ, анчах унччен çак çуртра пĕччен пурăннă хĕрарăмăн çывăх çыннисем темшĕн-çке хирĕçленĕ: «Пирĕн харпăрлăх, унпа хамăр хуçа!» Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ку ыйтăва чăннипех пĕччен татса параймĕ – саккун хушмасть. Килпетсĕр ӳкерчĕк текех куçа ан тирĕнтĕр тесе ăна урам енчен хуплама шантарчĕ.

Тепĕр пулăм та хирĕç тăрăва çивĕчлетнĕ темелле-ши? Çул ĕçченĕсем питĕ ыйтнипе ял тăрăхĕн пуçлăхĕ 38-мĕш çурт умĕнчи, ял урамĕпе иртекен çул хĕрринчи темиçе йывăça кастарнă. Çут çанталăк тусĕ В.Северов çакăнпа килĕшмен, район прокуратурине хут çитернĕ, йывăç касакансене явап тыттарма ыйтнă. Прокуратура ĕçченĕсем çыру йĕрĕпе вырăнта пулса тĕрĕсленĕ, Вениамин Васильевича йывăççене саккуна пăхăнса каснине палăртса хурав панă. Çакна район прокурорĕ В.Николаев алă пуснă хут та çирĕплетет.

Тепĕр пулăм та «çиеле тухрĕ». Хисеплĕ Вениамин Васильевич – çут çанталăк тусĕ кăна мар, унăн санитарĕ те. Тимĕр-тăмăр пухма кăмăллать иккен. Малтан ăна килĕ умĕнчех упранă. Урам илемне ярать тесе шаларах куçарма темиçе хут та сĕннĕ, анчах В.Северов ăна пурнăçлама килĕшмен. Çавăншăн яваплă орган Вениамин Васильевича 200 тенкĕлĕх штрафланă. Çакă унăн кăмăлне питех те пăснă терĕç ялта.

В.Северов унччен колхоз сачĕ пулнă вырăна тирпейлесе пăхса тăрать. Ял тăрăхĕн администрацийĕ сĕннипе. Анчах унта ĕçленĕшĕн шалу тӳлеме килĕшӳ хучĕ çырман. Калаçса татăлнă тăрăх – «мĕн ӳсни, мĕн туса илни пĕтĕмпех санăн».

– Сад юхăнса кайса тĕппипех ан пĕттĕр тесе хамах çапла тума сĕнтĕм. Вениамин Васильевич – ӳркенмен çын, çут çанталăка юратнăран ăна пĕтме памастех терĕм, – терĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Ракчеев. – Каярахпа çав çĕр лаптăкне харпăрлăха куçарма сĕнсе те пăхрăм. Налук тӳлемелле тесе килĕшмерĕ...

Çыру авторĕпе килĕнче тĕл пултăм. Нумайччен калаçса лартăмăр. Ял çыннисемпе, ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе диктофонпа çырса илнĕ калаçăва итлеттертĕм. Çырури кашни пулăм пирки уйрăммăн пуплерĕмĕр. Куçа-куçăн тĕплĕн калаçни Вениамин Васильевичăн кăмăлне уçнине туйрăм. Анчах калаçу вĕçĕ шартах тĕлĕнтерчĕ: «Çынсем мана кураймаççĕ...» Манăн «Мĕншĕн?» ыйту хуравсăр юлчĕ.

Шупашкара, ĕçе таврăннă чухне ăнкарса илтĕм: вĕчĕх тытни, усала усалпа тавăрма хăтланни /эсĕ мана – штраф, эпĕ сана – çăхав/, пĕр-пĕрне ăнланма тăрăшманни, хамăр йăнăша йышăнма пĕлменни тата ытти те пăсать пире. Ку тĕслĕхри пек, айтăр-ха, кӳренсе тата кӳрентерсе пурăнар мар. Килĕшӳллĕ пулнине мĕн çиттĕр? Çыру авторĕ çак чăнлава ăнланса йышăнчĕ пулĕ тетĕп.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

*Лару*

# «Пĕр-пĕрне ăнлансан сахалрах йăнăшăпăр...»

Журналист ĕçĕпе çула тухсан пĕр район администрацийĕнче пăшăрханулăн «Тĕрĕслевсем хăшкăлтарчĕç, комисси хыççăн комисси килет» тенине илтме тӳр килнĕччĕ. Тӳрех каласа хăварам: ку çулталăк каялла пулнăччĕ. Паянхи ӳкерчĕк еплерех? Вырăнти влаç тытăмĕнчисене сăнавпа тĕрĕслев органĕсем халĕ те малтанхи пекех канăçсăрлантараççĕ-ши?

– Хирĕç тăруллă самантсене уçăмлатма республикăра мобильлĕ ушкăн йĕркеленĕ. Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕ хыççăн ăнланманни-килĕшменни тупăнсан вăл тӳрех унта çитсе ĕçе тытăнать, – хуравларĕ ЧР Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев. – Ушкăнăн кăçалхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче иртнĕ пĕрремĕш ларăвĕнче, акă, ял тăрăхĕсен территорийĕсенче юрăхсăра тухнă чĕр кĕмĕллĕ /ртуть/ лампăсене пухса ăна сиенсĕрлетекен предприятисене леçес ыйтăва тишкертĕмĕр. Кунтах батарейкăсене тата хими элеменчĕсемлĕ ытти хатĕр-хĕтĕре тирпейлес ыйту та çĕкленчĕ...

Станислав Андреевич палăртнă тăрăх – муниципалитет ертӳçисемпе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен полномочийĕпе тивĕçĕ чылай, анчах нумай чухне ăна пурнăça кĕртмелли çул-йĕре укçа-тенкĕпе çирĕплетмен. Çавăнпа та ку е вăл ыйтăва татма кĕмĕл ыйтăвĕ тухса тăрсан ăна бюджетри хăш статья шучĕпе пурнăçласси пирки пуç ватма тивет. Унсăрăн... Мĕншĕн тесен çулталăкри бюджета çирĕплетнĕ чухне кашни тенкĕне ăçта ямаллине тĕллевлĕ палăртаççĕ-çке.

Раççей Федерацийĕн Регион аталанăвĕн министерстви вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 22 сăнавпа тĕрĕслев органĕ /прокуратура, МЧС, УФАС, Россельхознадзор, Ростехнадзор т.ыт.те/ 40 енпе тĕрĕсленине çирĕплетет. Тĕрĕслевçĕсем тепĕр чухне финанс, пурлăхпа техника ресурсĕсен тĕлĕшĕнчен пурнăçлама питех те йывăр предписани е акт хăвараççĕ, муниципалитетăн ахаль те чухăн бюджетне татах та çуклăха куçаракан штраф санкцийĕ йышăнаççĕ. Ку татса памалли ыйтăва тата йывăрлатать.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта влаç тытăмĕнчисем патĕнче тĕрĕслевçĕсем 270 хут пулнă. Ытларах – федерацин территори ĕç тăвакан влаç тытăмĕнчисем. Тĕрĕслевсен пĕтĕмĕшле кăтартăвĕнче 81,5 проценчĕ – вĕсен. Хамăр республикăрисен цифри самай пĕчĕк – 9,5%. Малтан графикпа палăртман тĕрĕслев ытларах ирттерсе «сехĕрлентернĕ» пулсан – кăçалхи виçĕ уйăхра ун пеккисен шучĕ палăрмаллах чакнă е палăртнинчен 45% сахалрах ирттернĕ. Тĕрĕссипе вĕсем унччен, иртнĕ çул хăварнă предписанисемпе актсене мĕнле пурнăçланипе çыхăннă. Канашăн ĕç тăвакан директорĕ С.Николаев илсе кăтартнă тĕслĕх шухăша ячĕ. Планпа ирттернĕ тĕрĕслевсем ĕçри кăлтăк-йăнăша «вăрттăн» пырса тĕрĕсленинчен /52%/ ытларах /72%/ тупса палăртма пулăшнă иккен. Яваплисене 433154 тенкĕ штраф тӳлеттернĕ.

Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлне сăнаса тата тĕрĕслесе тăракан ведомствăсен хушшинчи комиссийĕн Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе иртнĕ анлă ларăвĕнче республика Ертӳçи федерацин тата Чăваш Енри тĕрĕслевпе сăнав органĕсене вырăнти влаç органĕсене питех «сехĕрлентерме» кирлĕ, предписанисем пурнăçлама май çуккисен шутĕнчен пулмалла марри пирки асăрхаттарчĕ. Унсăрăн вĕсен усси сахалли е ĕç кăтартăвĕнче пачах тӳнтерле çаврăнса тухасси çинчен каларĕ. Çав вăхăтрах икĕ енне те – муниципалитет влаç тытăмĕнчисене те, тĕрĕслевпе сăнав органĕсен ертӳçисене те – ӳпкев сăмахĕ тиврĕ. Патшалăх пурлăхне сутнă тата аукционсем ирттернĕ чухне шанчăксăр подряд организацийĕсем мала тухнă тĕслĕхсем пулнă. Каярахпа вĕсемпе тунă килĕшӳсене пăрахăçлаттарма çав тери йывăррине Михаил Васильевич тĕслĕхпе çирĕплетрĕ.

Юлашки вăхăтра икĕ енлĕ хутшăнусем çирĕпленсе пынине кăмăлтан палăртрĕç. Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн ĕç тăвакан дирекцийĕ республикăри Юстици министерствипе тата Прокуратурипе тачă çыхăну йĕркеленĕ. Ведомствăсен специалисчĕсем нормăпа право акчĕсене тĕрĕс хатĕрлеме, йышăнма пулăшаççĕ, ытти темăпа консультаци ирттереççĕ, семинарсем йĕркелеççĕ. Район администрацине çитсе «çавра сĕтелсен» ĕçне хутшăнаççĕ. Чăваш Республикин прокуратурин сайтĕнче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче ирттермелли тĕрĕслевсен графикне вырнаçтарни те усăллă терĕç ларăва хутшăннисем. «Вăрттăн» пырса «сехĕрлентернĕ чухне алă-ура çыхланнине» чылайăшĕ хăй туйса курнă ĕнтĕ.

Чăваш Республикин юстици министрĕ Надежда Прокопьева ведомствăсен хушшинчи мобильлĕ ушкăнăн пĕрремĕш кварталти ĕç-хĕлне тишкерчĕ, хирĕç тăруллă лару-тăруран тухмалли çул-йĕр çинче чарăнса тăчĕ. «Пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса ĕçлесен сахалрах йăнăшăпăр, явап тыттарасси те чакĕ, усси вара ытларах пулĕ», – пĕтĕмлетрĕ хăйĕн сăмахне Надежда Викторовна.

■ **Юрий ПЕТРОВ**

• ➡ *11, 12 стр.*

*Чун киленĕçĕ*

# Шăрçа хурăн айĕнче ай аван!



Акă вăл, пултаруллă ăстасен "çимĕçĕ"!

Вăрмар районĕнчи Энĕшпуç сали ку тăрăхри алă ăстисен сăпки тесен те йăнăш мар пуль. Николай Ильин тĕрлĕ материалпа усă курса ăсталанă чиркӳ е арман кӳлеписене тинкеретĕн е чылай кил хуçалăхĕн йăран çинчи "нăрик-нăрикĕсем" çине пăхатăн – чунра ăшă пулса каять. Кусем те тарамаха, маттур пикесем вĕтĕ шăрçаран "çитĕнтернĕ" виçĕ метра яхăн çӳллĕш хурăна курсан вара куçа чылайччен урăх япала енне куçараймастăн.

– Кӳршĕ хĕрарăмĕ патĕнче пĕррехинче /тăватă çул каялла пулчĕ ку/ вĕтĕ шăрçаран илĕртӳллĕ япаласем ăсталама хăнăхмалли журнал алла лекнĕччĕ. Ӳкерчĕксенчи хитре чечексене курса киленнĕ хыççăн вĕсене ниепле куç умĕнчен сиреймерĕм. Çавăн хыççăн лавккасенче ал ĕç журналĕсене сăнама пуçларăм. Шел, питĕ хаклăччĕ вĕсем. Мĕнле çыхмалли çинчен ăнлантарнине Интернетра шырама пикентĕм вара. Çапла лекрĕм эпĕ вĕтĕ шăрçа "тыткăнне", – аса илет хобби çуралнă саманта ушкăнри "чи пысăк стажлă" шăрçаçă Алина Вячеславовна Николаева.

Пултаруллă хĕрарăм паян ку алă ĕçĕн вăрттăнлăхĕсене кирек кама та вĕрентеет. Чи малтан унăн урокĕсене илекенĕ пĕр ялтах пурăнакан Мария Ларионова пулнă.

– Пĕррехинче Алина шăрçаран йывăç ăсталани çинчен пĕлтерчĕ, кĕрсе курма сĕнчĕ. Чăн та, питĕ хитре – манăн та çак пултарулăха алла илес кăмăл çуралчĕ. Сăмах вĕççĕн ăнлантарнă хыççăн килте хăтланса пăхрăм та – пулать пек! Çапла "чире ертĕм", хăш-пĕр чухне апат çинчен те манаттăм – пуçланă япалана часрах хатĕр тăвас килет – мĕнлерех пулассине малтанах чухлаймастăн вĕт, – тĕлĕкре те тĕлленмен чун киленĕçĕ çинчен хаваспах каласа кăтартать вырăнти почтальонра ĕçлекен 5 ача амăшĕ.

Алина Вячеславовна вара тăватă çулта груз турттаракан пĕр машинăна тултармалăх сувенир ăсталанах тесе ĕнентерет. Вĕтĕ шăрçаран тунă куршакри илемлĕ чечексене, тĕмсене сутса хăйне май услам тума та вĕреннĕ. Çапла унăн япалисене ентешсем кăна мар, Хусан çыннисем те ытараймасăр сахал мар туяннă. Пултаруллă алă ăстине Хусансем Универсиадăна килекенсене капăр япаласем сĕнме те йыхравланă пулнă, анчах хăйĕн таварне унта-кунта "сĕтĕрсе" ыванннă Вăрмар хĕрарăмĕ чаплă мероприятие хутшăнман. Сăмах май, вăл Хусанта чукун çул вокзалĕнче операторта тăрăшать.

...Энĕшпуç ял тăрăхĕн администраци çуртне кĕрсен илемлĕ хурăна асăрхамасăр май çук. 2 метр та 75 сантиметр çӳллĕш "ӳсе ларнăскере" малтанах чĕрĕскер пекех йышăнатăн. Вичкĕн куçли вара вăл вĕтĕ шăрçаран ăсталанăскерне тӳрех сăнать те камăн асамлă алли çак илеме калăплама пултарни çинчен шухăшлать ахăртнех. Халĕ ĕнтĕ эпĕ, республикăн тĕп чăваш хаçатĕнче ĕçлекенскер, унăн авторĕсене пĕлетĕп: Алина Николаева, Марина Николаева, Мария Ларионова тата Галина Селастей.



Шăрçа "тыткăнне лекнĕ" Алина Николаева.

– Пирĕн ял питĕ хитре, пуян теме те пулать. Анчах пирĕн пĕр инкек – клуб çук. Пĕррехинче тĕслĕх библиотекăна мероприятие пухăнсан ял тăрăхĕн администрацийĕ умĕнче пулас клуба вырнаçтарма хурăн çыхса парнелеме сăмах патăмăр. Ăна çилпе вĕçтермесĕр ĕçе пуçăнтăмăр, ĕлкине хамăрах шухăшласа тупрăмăр, – калаçăва тăсать алă ăстисен "бригадирĕ" Алина.

Тĕлĕнтермĕш, урăх ниçта курман çак йывăçа хатĕрлемешкĕн 3 уйăх хăйсен вăхăтне вăрланă ялти харсăр хĕрарăмсем. "Пĕр 10 пин тенкĕлĕх материал кайрĕ /вĕтĕ шăрçана кунтинчен чылай йӳнĕрех хакпа Мускавран пĕлĕшĕсем илсе килнĕ. – Авт./. Шăрçасăр пуçне изолента, клей, цемент, хăйăр, тимĕр пăрăх /йывăç вулли/, алюмини пралук кирлĕ пулчĕ. Хăш-пĕр материалпа Энĕшпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Олег Анатольевич Иванов, питĕ пуçаруллă ертӳçĕ, тивĕçтерчĕ", – теççĕ çĕр ĕçĕпе тăрмашнă хушăрах çакнашкаллипе аппаланма та вăхăт тупнă пикесем.

Кур та савăн! – этемрен çӳллĕ шăрçа йывăç хĕлĕн-çăвĕн "ешерсе" куçа тыткăнлать. Ваттисен авалхи сăмахĕ тĕрĕсси пирки никам та тавлашмĕ: ӳркенмен ăста пулнă. Статьяна вĕçленĕ май Чăваш Ен Культура министерствине пырса тивекен ыйтăва уçăмлатасси кăна юлчĕ: Вăрмар тăрăхĕнчи улăх-вăрман та кӳлĕ-пĕве илемĕпе кăчăк туртакан Энĕшпуçĕнче клуб хăçан ӳсе ларĕ-ши?.. Ăна ял-йыш кăна мар, хайхи хурăн та кĕтет-çке...

**Ирина ПУШКИНА**

*Ахрăм*

# «Куçна тĕлле хĕвел çине»

**/Хальхи чăваш кинематографĕн вăрттăн туртăмĕ пирки/**

*Чăваш киновĕ – «Хыпарăн» кăçалхи тĕп темисенчен пĕри. Хаçат тĕпелĕнче иртнĕ «çавра сĕтел» пирки çырнине В.Багадерова «Мĕн пур искусствăран пĕлтерĕшли – кино» тесе ят панă /2014, çĕртме, 4/. Ятне вăл Вячеслав Оринов сăмахĕнчен илнĕ, Оринов – Ленинран. Çак сăмахсем паянхи чăваш чун тăрăмне тĕп-тĕрĕс палăртаççĕ. «Эп мĕн туни кăна пĕлтерĕшлĕ», «Эп кăна тĕрĕс», «эп кăна çын», «эп мĕн с...и те ылтăн»... Чăваш поэчĕ-прозаикĕсен, художникĕ-скульпторĕсен, композиторĕсен тата ытти ӳнерçĕ ĕçĕ вара пĕлтерĕшлĕ мар-и?*



А.МИТТОВ ӳкерчĕкĕ

Кĕтрет /чудо/ теес килет манăн К.Иванов, Çеçпĕл Мишши, П.Эйзин, Н.Теветкел, И.Дмитриев тата ыттисен сăввисене. Иван Юркинăн архивра упранакан пултарăвĕ, Хусанкайпа Ухсай, Юрий Скворцов çырнисен пуххи, Мĕтри Юманпа Хумма Çеменĕн тата ыттисен чун талпăнăвĕ уй пек аслă, вăрман пек пуян пулнине çирĕплетеççĕ. Ялавин, Рсай, Еллиев, Лисина тата ыттисем – космос шайĕнчи пулăм. Уярпа Айхи, Артемьевпа Мартынов, Ишентейпе Кервен, Чиндыковпа Тарасов, Карягинăпа Сельвестрова, ытти вун-вун çыравçă чăваш сăмахĕн çуртне хăпартнă. Чăваш литератури пур, пулать. Литература – пирĕн халăхăн таланчĕ, çут çанталăк пани. Юрий Зайцевпа Анатолий Миттов, Анатолий Розовпа Петр Петров, Геннадий Исаевпа Николай Енилин, Юрий Ювенальевпа Станислав Юхтар, Владимир Енилинпа Валерий Мытиков тата çĕр-çĕр ӳкерекен изоискусство пирки те пур, пулать тетĕп. Чăваш музыки пирки шухăшланă чухне ялан Александр Осипов калани аса килет: «Ылтăн тăрăх çӳретпĕр». Геннадий Воробьев, Александр Васильев тата ытти композитор çав ылтăн патне пĕшкĕнчĕç те – чăваш музыкине тĕнче шайне çĕклерĕç. Зинаида Козлова, Виталий Адюков, Земфира Яковлева тата ыттисем халăх юрри чăн-чăн ахах пулнине ĕнентерчĕç. Эппин, чăваш музыки пур, пулать.

«Кино туйăмне пур халăха та паман: пĕрисен вăл пур, теприсен пач çук», – тет Андрей Плахов кино тĕпчевçи. Театр пирки те çавнах каламалла. Чăваш театрĕ пирки 30 çул шухăшланине пĕтĕмлетем: чăваш театрĕ пур тесе калама иртерех. Валерий Яковлев театрĕ, Вячеслав Оринов театрĕ, Иосиф Дмитриев театрĕ, Стас Васильев театрĕ тата ытти режиссер театрĕ пур. Анчах пĕр пĕтĕмĕшле пулăм пек чăваш театрĕ – çук. Валерий Яковлев ытларах хăйне палăртасси пирки шухăшлать. Иосиф Дмитриев та режиссер ĕçĕнче хăйне – театра е халăха мар – маларах лартнăн туйăнать.

«Мĕн вăл наци? – çырать Лев Гумилев. – Наци вăл – этнос хăйне епле тытнин стереотипĕ, хăнăхнă йăли». Чăваш хăйне епле тытни вăл – ыйтусен ыйтăвĕ. Сцена çинче, экран çинче епле тытнине чăвашла темен пулăттăм. Вячеслав Оринов – театрта, Владимир Карсаков фильмсенче халăх хăйне епле тытнине палăртма хăтланса пăхрĕç. Анчах ку – пуçламăшĕ, пĕрремĕш утăмсем. Халăх хăйне епле тытнине шута хурса аталанас пулсан театр та, кинематограф та тахçанах чăвашлăх йĕрĕ çине ӳкмелле. Театрти сцена та, экран çинчи кадр та чăвашла талккăш-анлăш тупнă пулĕччĕ.

Паллах, театрта та, кинематографра та мĕн пулса иртнин вăрттăн тупсăмне шырама пулать. Шырамалла та. Николай Бердяев кино курма вăрмана канма кайнă пек çӳренĕ /Бердяева Лидия. Профессия: жена философа. М., 2002. 41 с./. «Символсен вăрманĕпе çӳретĕп, вĕсен сĕмлĕхĕнче путатăп», – унăн асне килнĕ, ахăртнех, Шарль Бодлерăн «Шайлашусенчи» йĕркисем. Философ фактсене е пулăмсене епле шĕкĕлченине ăнланма унăн «О «вечно-бабьем» в русской душе» /1914/ ĕçне вулама сĕнетĕп. Мĕн каланă пулĕччĕ-ши Николай Бердяев В.Оринован «Хаяр ытамне», В.Карсаковăн «Юххине», А.Степанов-Пăрттан «Чупкăнне», А.Васильевăн «Нарспине» курас пулсан?

**Юрий ЯКОВЛЕВ**

*Ял уявĕ*

# Илемлĕ-çке тăван тăрăх...

*Çĕнĕ Эйпеç – Елчĕк районĕнчи чи илемлĕ, ешĕл те хăйне евĕрлĕ хăтлă вырăн. Çакăн пек чыса кăçал 150 çул тултарнă ял иртнĕ ĕмĕр варринчех, В.Чапаев ячĕллĕ колхозăн пахча çимĕç бригадирĕ Д.Воробьев СССР ял хуçалăх çитĕнĕвĕсен куравĕнче бронза медаль илнĕ хыççăн, тивĕçнĕ. Дмитрий Андреевичран тĕслĕх илсе кашни уйрăм хуçалăхрах çавăнтанпа улма-çырла сачĕ ĕрчетме пуçланă.*



Çĕнĕ Эйпеç кӳршĕллĕ Лаш Таяпапа, Кивĕ Эйпеçпе, Кавалпа е Аслă Пăла Тимешпе танлаштарсан пысăках мар. Кунта халĕ 300 яхăн çын пурăнать. Çĕнĕ Эйпеçсем хăйсен мухтавлă ывăлĕ-хĕрĕпе тивĕçлипе мухтанаççĕ. Кунта çуралса ӳснĕ А.Федоров 1920 çулсенче Елчĕк район ертӳçинче, «Чăвашторг» пĕрлешĕвĕн директорĕнче тата ЧАССР социаллă хӳтĕлев халăх комиссарĕнче ĕçленĕ. Архип Федоровичăн ятне 1957 çулта республикăн Хисеп кĕнекине кĕртнĕ.

Унăн çывăх юлташĕ биологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ А.Байдуганов 1930 çулсенче Мускаври зоопарк директорĕн çумĕнче тата К.А.Тимирязев ячĕллĕ ял хуçалăх академийĕнче преподавательте вăй хунă. ЧАССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ В.Евполов «Слава» колхозăн комплекслă бригадирĕнче чĕрĕк ĕмĕр ытла ĕçлесе совет правительствин тăхăр орденĕпе медальне тивĕçнĕ.

Çĕнĕ ĕмĕр пуçлансан ял халăхĕ вырăнти колхоз председателĕн çумĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă хисеплĕ çынна, Халăхсен Туслăхĕн орденĕн кавалерне Г.Туманова старостăна суйланă. Геннадий Тимофеевичпа унăн хастар та пуçаруллă ентешĕсем Çĕнĕ Эйпеçре Çимĕк кунĕнче ялăн 150 çулхи юбилейне ирттерчĕç.

Уява пухăннисене ял юбилейĕпе ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ А.Князев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Н.Миллин, Чăвашпотребсоюз правленийĕн председателĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Павлов, Чĕмпĕр облаçĕнчи «Эткер» фонд тата телекурав ертӳçи, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ О.Мустаев, кире пуканĕ спорчĕ енĕпе тĕнче чемпионĕ Ю.Карпов тата ыттисем саламларĕç.

Уяв хĕрсе пынă вăхăтра Çĕнĕ Эйпеçсен Мускавра пурăнакан ентешĕ, РФ Следстви комитечĕн аслă следователĕ, юстици генерал-майорĕ В.Журавлев килсе çитрĕ.

– Ял старости Геннадий Туманов алă пуснă йыхрава илсен ăна хамăн пуçлăха Александр Бастрыкина кăтартрăм. Вăл ирĕк панипе тӳрех тăван яла тухса килтĕм. Мĕн чухлĕ савăнăç кунта! Питĕ илемлĕ-çке манăн тăван ял, – савăнăçне пытараймасăр пĕлтерчĕ Владимир Николаевич.



Генерал-майор шухăшĕпе, паллах, Çĕнĕ Эйпеç ялĕн уявне хутшăннă кашни çын килĕшет.

**Петр СИДОРОВ**




© ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем

# Курав уçăлнă

*ЧР Наци библиотекин «Кĕмĕл ĕмĕр» галерейинче Культура çулталăкне халалласа картинăсен куравĕ уçăлнă.*

Унта 2013 çулта Киров облаçĕнчи Яранск хулинче иртнĕ Пĕтĕм Раççейри пленэра хутшăннă художниксен ĕçĕсене тăратнă. Экспозицисенче – çав тăрăхри çут çанталăк илемне сăнлакан живопиç, графика ӳкерчĕкĕсем. Аса илтеретпĕр: пленэра Пĕкĕлме, Йошкар-Ола, Хусан, Киров, Анат Чаллă, Чул хула тата ытти регионти 29 маçтăр хăйĕн ăсталăхĕпе паллаштарнă, йышра Шупашкар ӳнерçисем те пулнă. Хальхи куравра РФ тава тивĕçлĕ художникĕсен Виктор Бритвинпа Александр Федосеевăн, ЧР тава тивĕçлĕ ӳнерçин Валентина Милославскаян, Раççей фотохудожниксен союзĕн членĕн Эдуард Кранкăн тата ыттисен ĕçĕсемпе киленме май пур. Выставка уçăлнă кун йĕркелӳçĕсем хăнасемпе куракансене Яранск çĕрĕ çинчен каласа панă, пленэр пирки ӳкернĕ фильм-телерепортажпа паллаштарнă.



**Е.АНДРЕЕВ.**

# Берлинта – стажировкăра

*Çак кунсенче И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студенчĕсем Берлинтан таврăннă. Мĕн тĕллевпе кайнă-ха унта пирĕн ентешсем?*

Ют чĕлхе факультечĕн 14 вĕренекенĕ пĕр тăван Гумбольдсен ячĕллĕ аслă шкулта стажировкăра пулнă. Ольга Кириллова доцент ертсе пынипе çамрăксем Нимĕç чĕлхипе лингвистика институчĕ йĕркеленĕ семинарсене хутшăннă, Берлинта пурăнакан нимĕçсен пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă. Пирĕн ентешсене «Креатив çыру» семинарта хускатнă тема уйрăмах кăмăла кайнă, унта çыру чĕлхине аталантармалли çĕнĕ меслетсене ăша хывнă. Çавăн пекех пулас педагогсем Берлин студенчĕсемпе тата преподавателĕсемпе курса калаçнă, Германири чи сумлă музее – авалхи архитектура палăкĕсен управçине – кĕрсе курнă, Рейхстаг тăррине те хăпарма шикленмен тата ытти паллă вырăнсемпе паллашнă.

**А.ПЕТРОВ.**



# Талисман авторĕ – пирĕн ентеш

***Раççей Сурдлимп комитетĕнче 18-мĕш хĕллехи Сурдлимп вăййисен тĕп паллине палăртассипе иртнĕ конкурса пĕтĕмлетнĕ.***

Йĕлтĕрçĕсен Ханты-Манси автономи округĕнчи федерацийĕ пĕлтернĕ тăрăх – конкурса Томск, Мускав, Челябинск облаçĕсен тата Чăваш Ен дизайнерĕсем хутшăннă. Пур ĕçпе тĕплĕн паллашнă хыççăн çĕнтерӳçĕ ятне пĕлтернĕ: вăл – Çĕнĕ Шупашкарти Павел Сахаров. Шупашкарти «Диафильм» студире ĕçлекен ентеш конкурс валли мамонт çурине ӳкернĕ. Асăннă чĕр чун Югра тăрăхĕн пĕр пайĕ, вăл унти çут çанталăк хăвачĕпе илемне туллин сăнлать; çавăн пекех пĕчĕк те харсăр çуран хаваслă кулли Çĕпĕр кӳлĕсемпе тата юхан шывсемпе пуян, Раççей çыннисем тараватта ыр кăмăллă пулнине çирĕплетет. Аса илтеретпĕр: тĕнче ăмăртăвĕ Ханты-Мансийскра 2015 çулхи пушăн 28 – ака уйăхĕн 5-мĕшĕсенче иртĕ.

**А.МИХАЙЛОВ.**

# Сывлăх кунĕнче – стадиона

*Шăмат кун, çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче, Чăваш Енре сывлăхпа спорт кунĕ иртĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев указĕпе килĕшӳллĕн палăртнă кун çынсен кашни уйăхра спорт керменĕсене тӳлевсĕр çӳреме ирĕк пур.*



Бассейнра шыва кĕме кăмăл пур-и, тренажер залĕнче вăй-хала çирĕплетес тетĕн-и, конькипе ярăнма юрататăн-и – кашни хăй суйласа илет. Çав кунах çамрăксем тĕрлĕ ăмăртура вăй виçĕç, футбол уйĕсемпе волейбол лапамĕсенче турнирсем иртĕç. Чылай район-хулара пурăнакансем Чăваш Енри паллă спортсменсемпе пĕрле зарядкăна тăрĕç, вĕсемех ачасене ăсталăх сехечĕсенче çитĕнӳ вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарĕç. Лапамсемпе стадионсенче вĕтĕр-шакăрăн хаваслă стартсенче тупăшма май пулĕ.

Акцин тĕп тĕллевĕ – çынсене спортпа туслаштарасси тата сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарасси. ЧР Физкультурăпа спорт министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – çу уйăхĕнчи сывлăх кунĕнче республикăра 342 мероприяти иртнĕ, вĕсене сывă пурнăç йĕркине пăхăнакан 150 пин ытла çын хутшăннă, çав кун Чăваш Енре спортăн 4500 обьекчĕ ĕçленĕ.

**О.МАСЛОВ.**

ВЫРĂНТИ ХАЙ ТЫТАМЛĂХ

*Депутат*

# Пултаруллӑ, хастар

***Ачасене вăл чăваш чĕлхипе литератури юратма вĕрентет, ялта, районта иртекен пĕр ăмăртуран та юлмасть, унсăр концерт программи чухăнрах, общество ĕçĕнче хастар. Сăмах – Çĕнĕ Пуянкассинчи вăтам шкул учительници Эльвира Николаевна Кириллова /сăн ӳкерчĕкре/ пирки.***



Кăçалхи «Юлашки шăнкăрав» уявĕн сценарине вун пĕрмĕшсем илемлĕ те кăсăклă çырса хатĕрленĕ. Юратнă учительсене, шкулти ытти ĕçчене тăван чĕлхепе чĕререн саламлани нумайăшĕн асĕнче юлĕ. Кунта, паллах, Эльвира Николаевнăн тӳпи те пур.

Чăваш наци конгресĕн районти уйрăмĕн членĕ пулма Пуянкассисем Эльвира Кирилловăна шанчĕç. Вăл малтанхи ларурах нумай сĕнӳ пачĕ, чăвашлăха юратма, ăна тĕрĕс вĕрентме ача сачĕсенченех пуçламаллине каларĕ.

«Наци кросĕ», «Раççей йĕлтĕрĕ» стартсене, çăмăл атлетикăпа иртекен ăмăртусене пурне те хутшăнать хастар хĕрарăм, волейболла та аван вылять. Çемье командипе пĕрре кăна мар республикăри ăмăртусенче вăй виçнĕ. Мăшăрĕпе Сергей Павловичпа, ывăлĕсемпе Владиславпа тата Даниилпа, хĕрĕпе Олесьăпа «Советская Чувашия» хаçат эстафетинче 2 хут, «Ял вăййисенче» 3 хут малти вырăна йышăнса парне илнĕ. Республика Пуçлăхĕн призерĕсемшĕн иртterекен ăмăртусенче тăтăшах малтисен шутĕнче. Концертсенче унăн çепĕç сасси пурне те тыткăнлать. «Энĕш хĕрринче», «Улькка кинĕн виçĕ кинĕ», «Çарăк» спектакльсенче вылянă сăнарсем нумайăшĕн асĕнче юлаççĕ.

Çĕнĕ Пуянкасси ял тăрăхĕн депутачĕн ĕçĕ-хĕлĕ нумай енлĕ. Учитель пулнă май ашшĕ-амăшĕ хушшинче ачасене тĕрĕс воспитани парассипе ĕçлемелле, çуллахи вăхăтра урамсемпе лапамсене тирпейлем кĕртме пурин те пĕр тĕллевпе тăрăшмалла, пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисем çинчен те ăнлантарса памалла т.ыт.те.

Тепĕр туртăм пур Эльвира Николаевнăн. Вăл – районти «Ял ĕçченĕ» хаçатăн уйрăлми тусĕ, час-часах тĕрлĕ статья хайлать. Унăн вĕренекенĕсен сăввисем те пичетленеççĕ район кăларăмĕнче. Аслă категориллĕ учитель патĕнче ăс пухакансем районта иртекен конкурссене яланах хутшăнаççĕ, малти вырăнсене йышăнаççĕ.

■ **Валерий ЧАЙКИН.**
Тăвай районĕ

*Яваплӑх*

# Пулăхлăха упрасси — пĕлтерĕшлĕ

***Хресчен мĕн ĕлĕкрен çĕре унăн пулăхлăхĕшĕн хакланă. Шăпах вăл тухăç мĕнле пулассине витĕм кӳрет-çке. Ӳсен-тăран илемĕ те çакăнпах çыхăннă. Тăпра – хăйĕн саккунĕсемпе пурăнакан тата аталанакан тытăм тесен те йăнăш пулмĕ.***



Тăпрари ырă мар улшăнусен черечĕ пуçланнине пула вăл пахалăхне çухатнине кашниех ăнланать. Çапах лайăх сийпе тимлĕ пуласси пирки нумайăшĕ манать çав. Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн ĕçченĕсем кашни çулах ку енпе йĕркене пăснă тĕслĕхсене тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Çакăншăн РФ КоАПĕн 8.6 статйин 1 пайĕпе айăплаççĕ. Пĕлтĕр 11 çĕр лаптăкĕ тĕлĕшпе аснăнă статьяпа ĕç пуçарнă. Пĕтĕмпе инспекторсем 6,7 гектар шар курнине тупса палăртнă.

Палăртмалла, район администрацийĕсем хăйсем те çакнашкал пулăмсем пирки управление пĕлтереççĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, 8 районтан килнĕ 30 çырăва тишкернĕ. Çав шутра 9-ĕшĕнче çынсем хăйсен тĕллĕн çĕрĕн çиелти сийне хырса илни пирки çырса кăтартнă.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пĕлтернĕ тăрăх иртternĕ тĕрĕслевсен кăтартăвĕсем юридици вăйĕнчи – 6, должноçри 5 çынна тата 18 гражданина административлă майпа явап тыттарма хистенĕ. Çав шутра – паха сие сая янăшăн та. Кунашкал киревсĕрлĕхе Шупашкар, Çĕрпӳ, Хĕрлĕ Чутай, Елчĕк, Вăрнар, Улатăр, Муркаш районĕсенче палăртнă.

Акă Вăрнар районĕнчи Пăртас ялĕнчи пĕр хĕрарăм ял хуçалăх продукцийĕ туса илмешкĕн 47,065 гектар арендăна илнĕ. Анчах та çак лаптăкри пĕр лапам /0,0562 гектар/ тĕлĕшпе инспекторсен ыйту сиксе тухнă. Ара, унта пĕве тума пуçланă. Çавна май тарăн шăтăках куç умне тухса тăнă. Паллă ĕнтĕ, паха сий «шăрши» те юлман унта. Çак ĕçе пуçарма ирĕк паракан документсем пулманни – пĕр ыйту. Ку тĕслĕхре рекультиваци пирки калаçни вырăнсăр пулĕ, проект та хатĕрлемен вĕт-ха.

Çĕмĕрле районĕнче вара хăйăр кăларнă чухне 0,22 гектар çинчи пулăхлă тăпра шар курнă. Çакăншăн яваплӑ обществăна 22 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Муркаш районĕнчи Ильинка ял тăрăхĕн территорийĕнче те хăйăр кăларма тытăннă пĕр общество паха сие упраса хăварма тăрăшман. Çĕре пăсни пирки управление уйрăм çын пĕлтернĕ. Унта та обществăн çĕр ĕçĕ ирттерме ирĕк паракан документсем пулман. Ку хутĕнче те – 22 пинлĕх штраф.

Елчĕк районĕнчи Кушкă ялĕн арçынни те строительствăн çак материалне 3 тонна яхăн кăларнă май çĕрĕн çиелти сийне хырса илнĕ. Унăн та штраф тӳлемелле тата çав лаптăка усă курма юрăхлатмалла.

Улатăр районĕнчи Алтышево ял тăрăхĕнче те çакнашкал ӳкерчĕк. Кунта хăть пулăхлă сие /380 кубла метр/ хăйăр кăларнă вырăнпа юнашар купаласа хунă. Шăтăкĕ вара – 1,5-2 метр тарăнăш. 0,19 гектара шар кăтартнă çын яваплӑхран, паллах, хăтăлайман.

Çул-йĕр тăвакан тата юсакан пĕр предприятин ĕçне вара пĕрре кăна мар тĕпчеме тивнине палăртаççĕ инспекторсем. «Ĕçне» терĕм-ха та, кунта пулăхлă сие вырăнтан куçарни пирки сăмах пынине палăртса хăварам. Шупашкар районĕнче, сăмахран, вĕсем 25 тăваткал метр лаптăка чавса пĕтернĕ. Иртнĕ çулсенче общество ĕç-хĕлне пула Муркаш, Вăрнар районĕсенчи ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем вараланнă.

Общество ĕçченĕсем инспекторсен асăрхаттарăвĕсене пĕтерме тăрăшаççĕ. Çакăнта штраф кăна мар, пулăхлă сие пăсни çĕрĕн ял хуçалăх пахалăхне чакарнине ăнланни витĕм кӳнĕ. Пулăхлăха тавăрасси – питĕ тăкаклă та кăткăс ĕç. Ăна вăхăтра пурнăçламаннипе лаптăка пусă çаврӑнăшĕнчен кăларас хăрушлăх тухса тăрать-çке.

■ **Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**управлени ĕçченĕ**

*Пулӑм*

# Кун йĕркинче — хăрушсăрлăх ыйтăвĕ

Çу тапхăрĕ пире ырă та канăç кун сахал мар парнелет. Кил тĕрĕшри ĕçсене пуçтарсан, тархасшăн, ялти пĕве хĕррине кайса шыва кĕр, хĕвел çинче хĕртĕн. Ял çыннин, паллах, ун пек рехетленме вăхăт сахалрах: вылăх-чĕрлĕхне те пăхмалла, утă-улăм хатĕрлемелле, пахчара тăрăшмалла, хăнана килнĕ мăнукĕсене пăхмалла. Кусем вара, вырăнта ларма-тăма пĕлменскерсем, кун хушшинче таçта та çитеççĕ, темĕнле вăйă та пуçараççĕ. Шăпах çакă шиклентерет те вăхăтлăха воспитатель пулса тăнă ватăсене. Хаçачĕсем те, радиохыпарлавĕ те унта та кунта хăрушă инкек пулни çинчен пĕлтерсех тăраççĕ: «Пушарта ачасен пурнăçĕ таталнă», «Ачасем шывран тухайман»...

Инкек-синкек аякран пăрăнса ирттĕр тата вăл пачах ан пултăр тесе Чăваш Республикинчи Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн ĕç тăвакан дирекцийĕпе ЧР Граждан обороны тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕ яллă районсене тухса коллегин анлă ларăвĕсене пĕрле ирттерессине çирĕп йăлана кĕртрĕç. Çакăн пек мероприяти хальтерех Красноармейски районĕнчи Упи ял тăрăхĕнче пулчĕ.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çу уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 177-мĕш указĕпе çав уйăхăн 26-мĕшĕнчен республика территорийĕнче пушар хăрушсăрлăхĕн уйрăмне çирĕплетнĕ май патшалăх комитечĕн ертӳçин тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлакан Олег Павлов районти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе специалисчĕсене, ял старостисене пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркине çак шăрăх çанталăкра уйрăмах çирĕп пăхăнмаллине тепĕр хут аса илтерчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Шестаков вырăнта пушар, ытти инкек-синкек хăрушлăхне чакарас, ял тăрăхĕсене пушар техникипе тивĕçтерес, сасă хатĕрĕсене вырнаçтарас, ятарлă дружинăсем йĕркелес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени пирки каласа кăтартрĕ, умри тĕллевсем çинче чарăнса тăчĕ. «Чăваш Республикинчи пушарпа кĕрешекен служба» хысна учрежденийĕн пуçлăхĕ Валерий Игнатьев муниципалитетсенче ку ыйтăва кун йĕркинчен кăларманнипе кăçалхи пушарсен шучĕ иртнĕ çулсенчи çак тапхăртан палăрмаллах чакнине çирĕплетрĕ. Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев ĕçкĕссен килĕсенче ытларах пушар тухнине шута илсе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене вĕсемпе тимлĕ пулма сĕнчĕ. Канаш районĕнчи Шăхасанти тĕслĕх те /ун чухне пушарта виçĕ ача пурнăçĕ таталнăччĕ/ ĕненмелле калать.

Шыва кĕнĕ чухне те пире тĕрлĕ инкек кĕтсе тăма пултарать. Юлашки çулсенче путса вилекенсен шучĕ ӳссех пырать. Ăна чакарасси пĕтĕмпех хамăртан, пирĕн асăрхануллăхран килни пирки «Чăваш Республикинчи шыравпа çăлав службы» хысна учрежденийĕн пуçлăхĕпе Олег Языковпа Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пай пуçлăхĕпе Юрий Сеткин калаçрĕç. Сӳтсе явнă ыйтусемпе коллеги ятарлă йышăну тунă.

■ **Юрий ПЕТРОВ**

# О.Говорун пулӑшма шантарнă

Çу уйăхĕн юлашки кунĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕн никама пăхăнман патшалăхсемпе çыхăну тытакан тата социаллă пурнăçпа экономика пĕлтерĕшĕн управленийĕн ертӳçи Олег Говорун видеоконференци мелĕпе çынсене хумхантаракан ыйтусене хуравланă. Йышăнăва РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн пулăшуçи Сергей Валенков, федерацин округри субъекчĕсенчи ĕç тăвакан влаç органĕсен представителĕсем хутшăннă.

Йышăну вăхăтĕнче пирĕн республикăри Хĕрлĕ Чутай салин çĕнĕ микрорайонĕнче пурăнмалли çуртсем тума уйăрнă çĕр лаптăкĕсене инженери коммуникацийĕсемпе /газ, шыв пăрăхĕсем хывасси, электричествăпа тивĕçтересси/ çыхăнтарма ыйтнă. Чăваш Республикин правительствин представителĕ çыхăнăва тухнă хĕрарăма çак тĕллевпе район администрацийĕ проектпа смета документацине хатĕрлесе çитернине, ăна патшалăх экспертизине ярса панине пĕлтернĕ. Газификаци программине черетлĕ улшăну кĕртнĕ хыççăн ЧР Строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерстви асăннă объектри ĕçсене кăçалхи çурла уйăхĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа 2015 çулхи утă уйăхĕн 31-мĕшĕччен вĕçлеме шантарать. Шыв пăрăхĕсем хывмалли, вĕсене пурăнмалли çуртсемпе çыхăнтармалли ĕçсен проектпа смета документацине 2014 çул вĕçне хатĕрлесе çитермелле. Инженери коммуникацийĕсене 2015 çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕччен вырнаçтарĕç. Ыйту мĕнле таталса пынине РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн аппарачĕ сăнаса тăрĕ.

■ **А.СТЕПНОВ**

● ➡ *12 стр.*

*Шухăш*

# Çыхман çапă шăпăр мар...

***Тутар Тимешĕнче пурăнакан 75 çулти шур сухал ыт ахальтен çеç хутсен тĕркемĕпе хаçат редакцине килмерĕ. Ял старости Мунир Ахмедуллов тĕрĕслĕх шыраса чун пăшăрханăвĕпе чăн малтанах район прокуратурине çул тытнă. Йĕрке хуралĕн ĕçченĕсем патне вара кашни вак ыйтупа кайманни каламасăрах паллă.***

2013 çулхи кăрлачăн 22-мĕшĕнчи граждансен пухăвĕнче Мунир абыя общество пурнăçĕнчи хастарлăхне, пуçарулăхне, çав вăхăтрах вăй-хăватне кура икĕ çуллăха ял старости пулма суйланă. Ун хыççăнах Туçа ял администрацийĕ çакна çирĕплетекен удостоверени тыттарнă. Унăн полномочийĕ 2015 çулхи раштав уйăхĕнче çеç тухать-ха.

Çулĕпе ура тапса ĕçлемелли вăхăт пулмасан та М.Ахмедуллов халăх шанса панă тивĕçе чунтан пурнăçлама пикеннĕ. Тутар Тимешĕ районта пĕчĕк ялсен шутне кĕрет, унти халăхăн нуши-терчĕ ыттисенни пекех. Мунир Ахмедуллович вĕсене май пур таран татса пама пулăшнă. Хăш-пĕрне çеç аса илетĕп. Чăн малтанах вăл хăйĕн пуçарăвĕпе тата тăрăшулăхĕпе Шкул урамĕнчен пуçласа ял масарĕ патне çитиччен çула вак чул сартарнă. Халĕ кунта йĕпе çанталăксенче унччен еврĕ пылчăк çăрăлмасть. «Чулпан» ял хуçалăх производство кооперативĕ панкрута тухнă хыççăн ял халăхĕ пысăк йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕ. Çĕр чылай вăхăт усă курмасăр, япăхса выртнă. Хастар ку ĕçре те пысăк пуçарулăх кăтартнă, ял çыннисене хăйсене тивĕçекен çĕр пайĕсемшĕн документ тума пулăшнă. Халăха утă-улăмпа, тырăпа тивĕçтермелли майсене те тупнă. Урамсене, ял масарне тирпейлĕ тытса тăрас, вырăнти мечĕте ĕçлеттерес тесе халĕ те сахал мар тăрăшать.

Çакнашкал ĕçлесе тăнă вăхăтрах кăçалхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче граждансен пухăвĕн кун йĕркине тем сăлтавпа çĕнĕ староста суйлас ыйтăва кĕртнĕ. Çак тивĕçе пурнăçласа пыма саккуна пăсса тепĕр çынна шаннă. Район прокурорĕ Ю.Фуражников ял старости М.Ахмедуллов çырăвĕ пирки ятарлă хурав панă. Унта çапла çырнă йĕркесем пур: «Раççей Федерацийĕнчи хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен» 131-мĕш саккунĕпе килĕшÿллĕн ака уйăхĕнче йĕркеленĕ пуху йышăнăвĕ тĕрĕс мар, ку вăл саккунпа пĕрлех Туçа ял тăрăхĕн уставне пăсни те. Пухăва муниципалитет влаç органĕн представителĕсем палăртман, кун пирки халăха маларах пĕлтермен». Урăхла каласан çыхман çапă шăпăр мар-ха вăл.

Йĕркене пăхăнса суйламан çын староста пулма пултарать-и? Çук. Ку вăл вырăнти халăха пăтратни, ĕçлекен çынна ура хума тăрăшни çеç тесе калас килет. Саккун паянхи староста хăй ирĕкĕпе заявлени çырса çак ĕçрен тухнине хирĕçлемест паллах. Анчах та общество хастарĕ халлĕхе çак «лава» туртса пыма хăйне шанать пулсан мĕншĕн ăна ĕçлеттермелле мар-ха? Сăмах май, прокуратура хучĕсен хушшинче ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.Перепелкин староста пирки çырнă характеристика та пур. Вăл çырура Мунир абый пирки начар шăрçалани те çук: тăрăшуллă, пуçаруллă, ял халăхĕшĕн нумай ĕç тăвать тата ытти те.

Ял старости пирки ял çыннисемпе те çыхăнса калаçас терĕм. Мĕнле хак параççĕ-ха унăн ĕçне?

**М.Гайнутдинова, пенсионерка:** «Паян пирĕн ялта ĕлĕкхи еврĕ кĕрлесе тăракан колхоз çук. Ку вăл хăй пĕр йывăрлăх. Çавăнпа та халăха тĕрлĕ енлĕ пулăшу кирлĕ. Ăна пире ку таранччен Мунир çеç татса пама пулăшнă. Ял малашлăхĕшĕн тăрăшакан пурришĕн савăнатăп çеç. Унăн ĕçне эпир хаклатпăр».

**К.Абдрахманов, пенсионер:** «Тутар Тимешĕнче пурăнса, хуçалăхра ĕçлесе ваталтăм. Халĕ чăнах та халăхпа ĕçлет, ăна ертсе пыма çăмăл мар. Мунир Ахмедуллович старостăна ларичченех ырă та пархатарлă ĕç туса пулăшатчĕ. Халĕ вара пушшех те пире çакнашкал çын кирлĕ. Вăйхăватне туйсан малашне те старостăрах ĕçлетĕр».

**Н.Димухаметова:** «Ял халăхне ĕçлеттерме те, уявсем туса пама та пултарать. Ăна çак тивĕçрен пăрасшăн пулнине нименле те ăнланма пултараймастăп».

Ялта ертÿçĕсем, старостăсем темиçе ĕмĕр каяллах пулнă. Вăл – хăйĕн территорийĕнче йĕрке, тирпей, тăнăçлăх туса тăракан хастар. Кашни килте çурт хуçи пулнă еврĕ, вырăнсенче те çакнашкал йĕрке кирлех. Мунир абый пиркиех сăмаха малалла тăсса çакна та каласшăн. Ваттисен каларĕшĕсен хушшинче «Ват лаша йăрана пăсмасть» текен сăмах çаврăнăшĕ пур. Çавăнпа та тĕрлĕ çĕрте ĕçлесе пуян опыт пухнă старостăна алăк хăлăпне тытма вăхăт çитсен вăл хăех çак тивĕçрен пăрăнĕ. Хальлĕхе вара вăл саккунлă старостах.

■ **Альбина ЕГОРОВА.**
Патăрьел районĕ

ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛАХ

## ЧНК уйрăмне йĕркеленĕ

**Йĕпреç.** Район активĕн нумай пулмасть иртнĕ пухăвĕн ĕçне хутшăннă ЧР муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев Чăваш наци конгресĕн ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕн паллаштарнă хыççăн сăмах илнĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Чугаров пухăннисене ЧНК Йĕпреçри уйрăмне туса хума сĕнчĕ. «Эпир пурте пĕр тĕллев-шухăшлă пулсан кăна чăвашлăха малалла аталантарма, ĕлĕк-авалтан упранса юлнă йăла-йĕркене сыхласа хăварма, аттеанне чĕлхипе мăнаçланма пултарăпăр», – çакăн пек шухăш патне пырса тухрĕç актив пухăвĕнче пулнисем.

Пуху ЧНКн Йĕпреçри уйрăмĕн правленине 13 çынран, унăн ертÿçи пулма район Пухăвĕн депутатне, «Путиловка» агрофирма» ООО директорне Владимир Марушева суйларĕ.

## Кĕвви пулсан сăвви тупăнатех

**Канаш.** Ку тăрăхри паллă çынсенчен пĕри – Николай Михайлов. Тыр-пул ăстисем те, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те лайăх пĕлеççĕ Николай Дмитриевича. Ара, вăл вĕсен кăмăлне туллин çырлахтаракан сахал мар юрă кĕвĕленĕ-çке, çав хайлавсем пултарулăх ушкăнĕсен репертуарĕнче вырăн тупнă.

Николай Михайлов композитор 75 çула çитнĕ пулсассăн та чунĕпе çамрăк. Вăл паян кунччен Сиккассинчи искусствăсен шкулне тата вырăнти халăх хорне ертсе пырать. Çак кунсенче ăна ялйыш сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламласа пултарулăх ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунчĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ паян та çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевсемпе хавхаланать.

– Тахçанах вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче ĕçлекен канăçсăр чун-чĕреллĕ çынсем çинчен юрă çырас шухăшпа пурăнатăп. Кĕввин йĕрĕ çине те ÿкнĕ ĕнтĕ. Хальлĕхе сăвви кăна çук, – тет Николай Дмитриевич. Çакăн хыççăн вырăнти сăвăçсем унăн сăмахĕсене шута илеççех.

■ **Г.ВАСИЛЬЕВ**

*Çивĕч ыйту*

## Тепĕр суйлавччен кĕттересшĕн-ши?

Эпĕ икĕ яла уйăракан /халĕ пĕр ял/ çырма урлă хывнă кĕпер, ăна асаттесен ашшĕсемех хывнă, çинче тăратăп. Вăл кĕперех те мар. Çын ун урлă каçма та шикленет. Шухăшланă-ши пирĕн тăхăмсем çак кĕпере тунă вăхăтра 400 çул иртнĕ хыççăн асăннă каçма суту-илÿ экономикин саманинче хăйĕн пĕлтерĕшне çухатасса? Революци хыççăн та ăна яланах юсавлă тытнă. Тăватă яллă Энтрияль ялĕн общини ун çинчен нихăçан та манман. Енккасси-Энешпуç вулăсĕн пуçлăхĕ кĕпер тума яланах кирлĕ материал тупнă, тара тытса юсаттарнă е çĕнĕрен тутарнă. Хальхи вăхăтра Вăрмар район администрацийĕнчи тÿре-шара пек: «Укçа çук. Ял тăрăхĕн тумалла», – тесе ларман. Район администрацийĕ пулăшмасăр Энтрияль ял тăрăхĕ хăй тĕллĕн кĕпере юсама е çĕнĕрен тутарма ниепле те пултараймасть. 1941-1945 çулсенче те, кайран та Энтрияль ялĕпе Вăрманкаса пĕрлештерекен кĕпер ялан юсавлă пулнă. Пăтăрмахлă самана пĕтĕмпех пăтраштарса ячĕ. Виçĕ ялтан – Энтрияль, Шутнерпуç, Уйкас – тăракан «Бишевский» колхоза панкрута кăларса тĕп турĕç. Район пуçлăхĕсем колхоз пурлăхне çĕнĕ хуçана йÿнĕ хакпа сутса ячĕç. Пĕтĕмпех алла çавăрса илнĕ хуçа колхозăн пурлăхĕпе хăйне кирлĕ пек усă курчĕ. Кĕпер те хăйĕн пĕлтерĕшне çухатрĕ.

А.Разумова Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне суйланă чухне ăна юсама пулăшрĕ. Унтанпа 7-8 çул иртрĕ.

Манăн шухăшăмпа – Вăрмар район администрацийĕн Энтрияль ялĕнчи кĕпере юсама е çĕнĕрен тума тăрăшмаллах. Ял тăрăхне шанса ларни усăсăр. Кĕпер тепĕр суйлавччен юхăнса ан вырттăрччĕ!

■ **Александр ВИШНЕВСКИЙ.**
Вăрмар районĕ

*Вăрнар тăрăхĕнче*

## Тĕп вырăнта – кану ыйтăвĕ

Ку тăрăхри ачасене çуллахи вăхăтра лайăх та тулли кану кĕтет. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Леонид Николаев каланă тăрăх – çĕртме уйăхне кĕнĕ-кĕменех çут çанталăкăн тĕлĕнмелле ырă та хÿхĕм кĕтесĕнче вырнаçнă Вăрнар енре ачасен сывлăхне çирĕплетмелли тапхăр пуçланнă. Кăçал нумай енлĕ кану программипе 3 пин ытла ача усă курĕ. Воспитательсемпе вожатăйсем вĕсем валли тĕрлĕ вăйăпа тупăшу, ăс-тăна, вăйхала пуянлатмалли конкурссемпе ăмăрту йĕркелеççĕ, вĕсене тăван тавралăх тăрăх çул çÿреве илсе тухаççĕ.

Кунпа пĕрлех хула тулашĕнчи лагерьсенче канма путевкăсем уйăрса параççи те тĕп вырăнта. Шкулсен çумĕнче усăнă 24 лагерьте 100 ытла вĕренекен канĕ.

## Ял юбилейне хатĕрленсе

Çĕрпел ял тăрăхĕнчи Хурăнсур Çармăс ялĕ йĕркеленнĕренпе кăçал 335 çул çитнине паллă тăвать. Ял-йыш хăнасене Питрав кунĕнче хăйĕн савăнăçне пĕрле пайлама уяв кĕрекине чĕнес тĕллевлĕ. «Унччен мĕн палăртнине пĕтĕмпех пурнăçлăпăр, – тет вырăнти депутат, ялти клуб пуçлăхĕ Михаил Кузьмин. – Пурте пĕрле яла тирпей-илем кĕртсе пĕтерĕпĕр. Çак кунсенче тĕслĕх вулавăша нимелле хăтлăлатрăмăр...»

Хурăнсурсем кирек хăçан та халăха йышлăн пуçтаракан праçниксене ĕç парнисемпе кĕтсе илессине тĕпе хураççĕ. Ку хутĕнче те вĕсен хăнасен умĕнче пичĕсене хĕретмелле пулмĕ. «Хорнзор» ЯХПК кăçалхи çурхи уй-хир ĕçĕсене вăхăтра та лайăх пахалăхпа вĕçленĕ. Халĕ кооператив ĕçченĕсем калчасене пăхса ÿстерес ĕçе кÿлĕннĕ, выльăх-чĕрлĕх валли паха апат хатĕрлеççĕ.

**Г.ЦЕНКУЗОВ.**

## Уявра савăннă

Муркаш районĕнчи Катькассем ял уявне 25 çул каялла пуçласа ирттернĕ, ăна малашне Çимĕк эрнинче йĕркелеме калаçса килĕшнĕ. Сăмаха çирĕп тытаççĕ. Кăçалхи те çÿллĕ шайра, пурне те кăмăла каймалла иртнĕ. Ял çыннисене тата аякран килнĕ йышлă хăнана ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Лебедев, район депутачĕ Л.Сергеева, ял тăрăхĕнчи «халăх тарçи» В.Волкова, сумлă хăнасем саламланă. Чи маттуррисемпе хастаррисене Геннадий Герасимович ял тăрăхĕн Тав хучĕсемпе чысланă.

Уяв «Çăлкуç» фольклор, Шомикри культура çуртĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕсен концерчĕпе тата тулăх кĕрекепе вĕçленнĕ. Ал ĕç куравĕн, спорт ăмăртăвĕсен çĕнтерÿçисене Дипломсем, хаклă парнесем парса хавхалантарнă.

**П.ЮРИН.**

**«Вырăнти хăй тытăмлăх» проект ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**
**Юрий СТЕПАНОВ хатĕрленĕ.** ● **Çырăр:** Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар». ● **Шăнкăравлăр:** /8352/ 28-85-01.

# МĔН ÇЫРАÇÇĔ ХАÇАТСЕМ

## Шăнтнă çынсене чĕртĕç



***Çывăх вăхăтра чĕртмешкĕн АПШран Мускава вилнĕ хыççăн шăнтнă пĕрремĕш çынна янă.***

Раççейри криокомпанин Америкăри «пациенчĕ» – Калифорнири 71 çулти Д.Хайко. Вилнĕ хыççăн ачисем ыйтнипе унăн ўтне типĕ пăр температурине çитиччен /-80⁰С/ сивĕтнĕ. Мускавра «пăр асаннене» тепĕр хут /-195⁰С – шĕвĕ азот температури таран/ шăнтнă. Халĕ унăн ўчĕ «шăнтнă» ытти 35 ўтпе Мускав çывăхĕнчи криоуправ территорийĕнчи саркофагра хăйĕн сехетне кĕтет.

### *Пăр кĕлеткесем*

– «Самантрах шăнтнă хыççăн ăнăçлă чĕрĕлессе паллă çынсенчен нумайăшĕ ĕненнĕ, – тенĕ «Аргументы и факты» хаçата **хими ăслăлăхĕсен кандидачĕ, ученăй-криобиолог тата Раççей криолабораторийĕн ертўçи Юрий ПИЧУГИН.** – Америкăра вилнĕ, крионика ăслăлăхне йĕркеленĕ Роберт Эттингера шĕвĕ азотра шăнтнă. Сальвадор Дали ку енĕпе хытă кăсăкланни паллă. Уолт Дисней, Артур Кларк фантаст тата ыттисем те «пăра» çаврăнасшăн пулнă. Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсенче паян 240 ытла криопациент. Вилнĕ хыççăн вĕсен е ўтне, е пуçне, е тата пуç мимине 196 градуса çити шăнтнă. М.Джексонăн пуç мимине те çапла пăрлантарнă пулмалла.

Хаксем пысăк пулин те океан леш енче çакнашкал тĕлĕнмелле майпа хăйсен тата çывăх çыннисен «иккĕмĕш пурнăçне» тăсма кăмăл тăвакан сахал мар: çын ўтне шăнтма 40-250 пин доллар тўлемелле, пуça е пуç мимине уйрăммăн – 80-120 пин доллар. Раççейре ку процедура чылай йўнĕрех – 30-10 пин доллар.

«Пăр пĕрчисем юн çаврăнăш тата нерв тытăмĕсене аркатаççĕ, тĕртĕмсем улшăнаççĕ, – ăнлантарнă «Аргументы и факты» хаçата **Александр ЛАВРИН çыравçă, «Вилĕмсĕррисен партине» йĕркелекенсен пĕри.** – Кунсăр пуçне физикăпа хими тĕлĕшĕнчен пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче нацистсем çавнашкал сăнавсем ирттернĕ. Концлагерьсенчи çынсемпе опытсем тунă, вĕсене ятарлă инъекцисемпе усă курса шăнтнă. Çапах та ăнăçусем пулман. Анчах та çакнашкал тĕслĕхсем те паллă – çынсем вăйлă сивĕре пулнă хыççăн вилнĕ пекех выртнă, çапах та юн таппи çĕтмен. Вĕсене йĕркеллĕ пурнăçа каялла тавăрма май килнĕ».

### *«Сăрă зонăра»*

Кирек мĕнле пулсан та криобиологсем хăйсен клиенчĕсене ăнăçу пуласса шантараççĕ. «Нерв тĕртĕмне электрон микроскоппа тĕпчени клеткăн тĕп матрици сыхланса юлнине кăтартса панă. Эппин, организма чĕрĕлĕх кўрес шанăç пур, – çирĕплетет криофирма ертўçисенчен пĕри **Данила МЕДВЕДЕВ футуролог.** – 80-мĕш çулсенче криобиологсем Америкăра тата Раççейре йытăсемпе, йĕке хўресемпе опытсем ирттернĕ. Вĕсене 2 сехет çурă – 4 сехет 0 градусран сивĕрех температурăра тытнă, тĕрĕссипе, чĕр чунсем вилнĕ пекех выртнă. «Ирĕлтернĕ» хыççăн чĕр чунсем чиперех пулнă. Америкăри больницăсенче çак технологие пациентсем çинче тĕрĕслесе пăхаççĕ: калăпăр, çын юн нумай çухатсан унăн ўтне темиçе сехетлĕхе шăнтаççĕ.

Искусствăлла майпа çие хăварма пулăшакан клиникăсенче те çавнашкалах пулса иртет темелле: эмбрионсен пысăк пайĕ /кайран вĕсене хĕрарăмсене куçарса лартаççĕ/ унта шĕвĕ азотра упранать. Куçарса лартма усă курнă чухне ўтĕн уйрăм тĕртĕмĕсене те шăнтаççĕ.

Мĕнле çынсене шăнтаççĕ-ха – хальлĕхе сыввисене е вилнисене? Пурнăçпа биологи вилĕмĕ хушшинчи «сăрă зонăра» чухне. Юридици тĕлĕшĕнчен илсен – вилнисене. «Çапах та тухтăрсем пуç мимми вилĕмне çирĕплетме пултараççĕ, çав вăхăтрах çын «вырăнĕ-вырăнĕпе» сывах-ха, клеткăсем арканма пуçламанха», – ăнлантараççĕ криобиологсем.

Криобиологсен прогнозĕсем тăрăх – «шăнтнă» пĕрремĕш çынна 2050 е 2100 çулсем тĕлне ирĕлтерĕç.

■ **Максим ВОЛОДИН**

*Истори*

## Чи хăрушă професси

***95 çул каялла утă уйăхĕн 16-мĕшĕнче çĕрле, 17-мĕшĕнче ир енне Екатеринбургра Ипатьевсен çурчĕн путвалĕнче II Микулай çемйине персе вĕлернĕ. Ку Романовсен династийĕнчи императорсене пиллĕкмĕш /I Кĕтерне тата I Александр тĕлĕнмелле вилĕмпе вилнине шута илсен çиччĕмĕш/ хут вĕлерни пулнă.***

### I Петĕр

1697 çулта чикĕ леш енне пĕрремĕш хут кайиччен I Петĕр стрелецсен полковникĕн Иван Циклерăн каварне тăрă шыв çине кăларнă. Хăйĕнпе пĕр шухăшлисене патша тăшманĕсен ушкăнĕнче тупнă: вĕсем ăна Петĕр кĕрекен çурта Циклер çунтарма хатĕрленни, пушара сўнтернĕ вăхăтра патшана вĕлересшĕн пулни çинчен



пĕлтернĕ. Патша каварçăсенчен пĕринпе вĕсен пухăвне кĕтмен çĕртен пырса тухасси çинчен каласса татăлнă. Çапла тунă та. Çакăн хыççăн историе кĕрсе юлнă стрелецсен пăлхавĕсем, вĕлерўсем пуçланнă.

1718 çулта та çавнашкал истори пулса иртнĕ. Ун чухне Петĕр патшана унăн ывăлĕ Алексей майлисем кавар хатĕрлени çинчен пĕлтернĕ. Петĕр вĕсен вăрттăн молебенне пынă, унта хутшăннисене пурне те арестленĕ.

Усал шухăш тытнă тепĕр çынна Преображени полкĕн парачĕ вăхăтĕнче тытса чарнă: çĕçĕ ярса тытнă арçын пĕр гвардеец патне пынă, ку гвардеец император хăй пулнă.

Çапах та I Петĕре хăйĕн хăш-пĕр тăванĕпе танлаштарсан «ăннă» темелле: вăл 52 çулта тĕрлĕ чире пула хăйĕн вилĕмĕпех вилнĕ.

### I Кĕтерне



I Петĕрĕн мăшăрĕ I Кĕтерне тĕлĕнмелле вилĕмпе пурнăçран уйрăлнă: 43 çулти чипер-сывă çўренĕ хĕрарăм кĕтмен çĕртенех сив чирпе аптраса ўкнĕ, çакăн хыççăн унăн ўпке абсцесĕ аталаннă. Монарх арăмĕн «çепĕç тусне» Меншикова шанман. Анчах та ăна императрицăна вĕлерессипе кăсăклантарсах кайман пулĕ.

I Петĕр тăхăмĕсенчен III Петĕр /ăна Петербург çывăхĕнчи Ропшăри керменĕнче вĕлернĕ/ тата I Павăл кавăрсене пула вилнĕ.

### I Павăл



I Павăла вĕлерме унăн ывăлĕ Александр хутшăннă-и? Вăл ашшĕне вĕлересшĕн пулман темелле, çапах та «Раççей ырлăхĕшĕн» ăна тронран урăхла мĕнле майпа уйăрăн-ха? Тĕп хулан çар кĕпĕрнаттăрĕ Петĕр Пален Павăла аслă кнеçсене Александрпа Константина арестлесси çинчен кăларнă указсене алă пустарнă имĕш, шăпах алă пуснисене курса ывăлĕсем çакна çирĕп шаннă: патшалăх йĕркине тĕпрен улăштармалла. Патшана вĕлернисен пĕр тăван Зубковсен йăмăкĕ, акăлчансен посолĕн Чарльз Уитвортăн еркĕнĕ Ольга Жеребцова чиперкке преступлени тумашкăн пулăшма пултарнă.

### I Александр

I Александр «ашшĕн вилли урлă каçса» хăй те пурнăçне ăнланмаллах мар ларутăрура вĕçленĕ. Ăна пытарнă хыççăнах сасхура сарăлнă: Петропавловск крепоçĕн соборĕнчи çăва шăтăкĕ пушах. Анчах та ăна уçса пăхас темен. Император Федор Кузьмич манаха «çаврăнни» çинчен калакан легенда илĕртўллĕ, анчах та Санкт-Петербург университечĕн профессорĕн Леонид Выскочковăн шухăшĕпе – кун пек пулма пултарасса ĕненме йывăр. Тухтăрсем те, священниксем те, патша çумĕнчи çынсем те килĕшсе татăлма пултарайман ĕнтĕ. I



Александр влаçа юратнă, çынна шанман. Патша хыççăн кам юласси çинчен калакан саккуна пичетлессине тăсса пынă: арăмĕ Елизавета Алексеевна /вăл чахоткăпа чирленĕ/ халь-халь вилессе кĕтнĕ. Вăл хăй иккĕмĕш хут авланĕ, тĕпкĕч çут тĕнчене килĕ тесе шухăшланă. Кăнтăра юлашки çул çўреве кайса император хăйĕнпе пĕрле пытару япалисем илнĕ, арăмĕ вилес тĕк кирлĕ пулĕç тесе шухăшланă – анчах та ку япаласем хăйне кирлĕ пулса тухнă.

### III Александр



II Александра /«Народная воля» членĕсем ун ури айне бомба пăрахнă/ вĕлернĕ хыççăн унăн ывăлĕ III Александр хăйĕн пурнăçĕшĕн пăшăрханма пуçланă. Паллă историк Евгений Анисимов патша никама та шанманни çынна тĕп туни çинчен каласа кăтартнă. Пĕррехинче император дежуркăна кĕнĕ, çав вăхăтра унта пулнă офицер хыçалти кĕсйине темĕскер чикнĕ. III Александр офицер еннелле персе янă, лешĕ çавăнтах вилнĕ. Офицер кĕсйине сигарет пытарнă.

Вырăс патшисем хăйсене вĕлересрен çеç мар, тухатнипе çыхăннă йăла-йĕркерен те шикленнĕ. Патша керменĕнче ўсен-тăран пайне е булавка тăрăнтарнă пуканене курсанах тĕпчеме пуçланă.

Романовсене хирĕç миçе хутчен каварлашнă, вĕсене миçе хутчен вĕлерме тăнă, шутласа кăларма йывăр – II Александра çеç вĕлерме çичĕ хут хăтланнă. Çĕр-шыва тытса тăраканăн профессийĕнчен хăрушăрахи тĕнчере текех çук та иккен.

■ **Савелий КАШНИЦКИЙ хатĕрленĕ.**

/«Аргументы и факты»/

*Истори*

# Писательсен союзĕ мĕнле чăмăртаннă?

***1934 çулхи çĕртмен 11-14-мĕшĕсенче Шупашкарта Чăваш совет писателĕсен союзĕн I съезчĕ иртнĕ.***

Иртнĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче Чăваш Енре прозаиксене, поэтсене, драматургсене, критиксене, литературоведсене, илемлĕ литература куçаруçисене тата сценаристсене пĕрлештерекен пултарулăх организацийĕ йĕркеленме пуçланă. Çак утăма тума хистекен сăлтав – ВКП/б/ ТК 1932 çулхи акан 23-мĕшĕнчи "Литературăпа ӳнер организацийĕсене çĕнĕлле йĕркелесси çинчен" йышăнăвĕ. Çак документ Совет Союзĕнчи пултарулăх интеллигенцине чăмăртанма самай пулăшнă.

Çапах та чăваш çыравçисем 1932 çулччен чылай малтан пĕрлешме пуçланă. 1901 çулта Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче Г.Кореньков çамрăк поэтсен союзне никĕсленĕ. Вĕсем алăпа çырса журнал кăларнă. 1906 çулта чăвашсен Хусанта тухма пуçланă пĕрремĕш хаçачĕ "Хыпар" та пултарулăх çыннисене пĕр çĕре пухнă.

1920 çулта Чĕмпĕрте çар гарнизонĕсемпе рабфаксенчи, "Канаш" хаçат, педагогика техникумĕ çумĕнчи литература кружокĕсен никĕсĕ çинче Чăваш писателĕсен обществине йĕркеленĕ. Пуçаруçи – А.Милли. 1923 çулта вăл Шупашкарта çĕнĕрен Чăваш литература обществине туса хунă. Анчах пĕрлĕх нумай ĕçлеймен, Чăваш автономи облаçĕн парти ĕçченĕсем Д.Эльмен, Н.Золотов тата ыттисем йĕркеленĕ "Канаш" союз хастарĕсен витĕмĕпе çĕртме уйăхĕнче саланса кайнă. "Канаш" пĕрлешӳ вăйланса пынă: 1924 çул тĕлне ун йышĕнче 107 çын шутланнă. Союз пуçарнипе "Сунтал" /1924/ тата "Капкăн" /1925/ журналсем тухма пуçланă.

1926 çулта "Канаш" союз Пĕтĕм Раççейри пролетари писателĕсен ассоциацине кĕнĕ. Союзăн III съездĕнче Чăваш пролетари писателĕсен ассоциацине туса хума йышăннă. Пĕрлешĕве пĕтерсе хуричченех, 1932 çулччен, ăна А.Золотов ертсе пынă.

Чăваш совет писателĕсен I съездĕнче Чăваш Енри совет писателĕсен союзне туса хума йышăннă. Профессионал писательсен пултарулăх организацине йĕркелени Чăваш Ен культурин аталанăвне ырă витĕм кӳнĕ. 1934 çулхи авăн уйăхĕнче союз съезд йышăнăвĕсене пурнăçа кĕртме, халăхра сарма пуçланă. М.Данилов-Чалтун, Н.Шупуççынни, Трубина Мархви, А.Золотов съезд ĕç-хĕлĕпе паллаштарма район центрĕсене, предприятисене, колхозсене тухса кайнă. Тĕл пулусенче вулаканпа тытакан çыхăнăва вăйлатасси, литература кружокĕсен ĕçне çĕнĕ варкăш кĕртесси, çамрăк писательсене пултарулăхне аталантарма пулăшасси, литкружоксенчи лайăх хайлавĕсен конкурсне йĕркелесси çинчен калаçнă.

Союз урăх республикăсемпе хуласенчи писательсемпе хутшăнусене вăйлатассипе те ĕçленĕ. 1935 çулхи çулла чăваш писателĕсен бригади /Митта Ваçлейĕ, Уйăп Мишши, А.Петтоки, А.Ĕçхĕл, И.Тукташ т.ыт./ социализм строительстви çинчен илемлĕ хайлавсен пуххине хатĕрлес тĕллевпе Казахстана тата ытти республикăна çитсе килнĕ. 1936 çулхи нарăс-пуш уйăхĕсенче чăваш литературин çитĕнĕвĕсене кăтартас тата СССРти паллă литература ĕçченĕсемпе çыхăну йĕркелес тĕллевпе Мускавра чăваш литературин вунă кунлăхне ирттернĕ.

Союз "Ялав", "Тăван Атăл", "Хатĕр пул" журналсем, "Дружба" альманах т.ыт.те кăларса тăнă, ун çумĕнче пропаганда бюровĕ, библиотека, Литература фончĕ, Пултарулăх çурчĕ, тĕрлĕ секци ĕçленĕ.

Чăваш Республикин хальхи истори архивĕнче ЧАССР писательсен союзĕн 1923-1979 çулсенчи тапхăра çутатакан фончĕ упранать.



■ **Л.КОЧЕТКОВА,**
**ЧР хальхи истори архивĕн ĕçченĕ**

# Сăмах каçмăш

**Николай КРАСНОВ /Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**



**Сылтăмалла:** 1. Кăçалхи çул палли. 3. Шетникпе лутка «тăванĕ». 6. Çар техники. 8. Вăл тураса якатсан та çаплах тăрса юлать. 10. Лаша çулĕн телейĕ. 11. СССР вăхăтĕнчи спортсменка, Олимп чемпионĕ. 13. Вĕренӳ çурчĕ. 14. Тамада сăмахĕ. 15. Кĕске пушă. 19. Кĕвенте çинче çакăнса пыракан. 20. Ăна çар çынни тивĕçет. 21. Шăтăк-çурăка тарса пытанакан кăпшанкă. 22. Шакла пуçа пытармалли хатĕр. 23. Хими элеменчĕ. 25. АПШри штат. 28. Шупашкара шăваракан юхан шыв. 30. Дагестанра пурăнакан халăх. 31. Мăнтăр пулă. 33. А.Пушкина пăхса ӳстернĕ ... Родионовна. 34. Кавказри юхан шыв. 35. Атăл юппи. 36. Кĕрхи чечек. 37. Инди укçи.

**Аялалла:** 1. Çамрăк гвардеецсенчен пĕри. 2. Карап çинче хыпăнса тар тăкни. 4. Уйăх ячĕ. 5. Çын ячĕллĕ пулă. 6. Тĕрлĕ организаци пĕрлешĕвĕ. 7. Кишĕр витаминĕ. 8. Пĕчĕк вăрман. 9. Çурт хушшинчен иртмелли вырăн. 10. Чăваш апачĕ. 12. Ухăран персе чапа тухнă спортсменка-ентеш. 15. Волейболла вылякансен «чăрмавĕ». 16. М.Горький çыравçăн «Изергиль карчăк» хайлавĕнчи сăнар. 17. ... така. 18. Йывăрăш виçи. 22. Теоретик мар. 24. Иисус Христос шыва кĕнĕ юхан шыв майлă çĕр-шыв. 26. Ювелирăн ĕç хатĕрĕ. 27. Планета. 29. Вырăссен «бейсболĕ». 30. Самолетсен гаражĕ. 32. Авалхи грексен вăрçă турри. 33. Вĕшле йытă.

## Сăмах каçмăш хуравĕсем:

**Сылтăмалла:** 1. Лаша. 3. Катка. 6. Танк. 8. Кăтра. 10. Такан. 11. Пресс. 13. Шкул. 14. Тост. 15. Саламат. 19 Витре. 20. Орден. 21. Таракан. 22. Парик. 23. Натри. 25. Алабама. 28. Атăл. 30. Авар. 31. Шампа. 33. Арина. 34. Аракс. 35. Кама. 36. Астра. 37. Рупи.

**Аялалла:** 1. Левашов. 2. Аврал. 4. Авăн. 5. Карп. 6. Трест. 7. Каротин. 8. Ката. 9. Арка. 10. Тултармăш. 12. Солдатова. 15. Сетка. 16. Лерра. 17. Мăкла. 18. Тонна. 22. Практик. 24. Иордани. 26. Лупа. 27. Марс. 29. Лапта. 30. Ангар. 32. Арес. 33. Акар.

*Çул çинче*

# Васкакан вакка сикет

***Апла кăна мар – сын пурнăçне татма та пултарать. Чул хулари пĕр фирма директорĕпе Чăваш Енре шăпах çапла пулса тухнă.***

Инкек Шупашкар районĕнче, Мускав-Ĕпхӳ автоçулăн 666-мĕш километрĕнче /цифрисем те, чăнах, чуна çӳçентерекеннисем/, пулнă. Чул хула çынни хăй те тунмасть: ăна ку тăрăхри пĕр объектра кĕтнĕ – çавăнпа васканă. Хăйĕн «Вольво» джипĕпе çулăн сулахай йĕрĕпе самай пысăк хăвăртлăхпа пынă. Хăй каланă тăрăх – сылтăмра фура пулнă, çавăнпа вăл ун хыçĕнчине курман. Кĕтмен çĕртен çуран çынсем çул урлă каçмалли вырăнта такамăн мĕлки курăнса кайнă. Иномарка водителĕ тормоз çине те пусса ĕлкĕреймен – тепĕр çын каçать! Пĕрремĕшне ăннă, тепри вара шăпах машина кустăрми айне пулнă. «Вольво» тинех чарăннă. Çул çинче выртакан арçын хускалман ĕнтĕ – çавăнтах вилнĕ.

Шупашкар районĕн полицийĕнче пĕлтернĕ тăрăх – джип водителĕ апла-капла кутăнлашса тăман, айăпне йышăннă, вилнĕскерĕн, Шупашкар районĕн арçыннин, тăванĕсене кӳнĕ сиене саплаштарнă: арçынна пытарма, ытти тăкак валли укçа панă. Çавăнпах-çтăр лешсем аваришĕн айăпласкере çирĕп явап тыттарас тесе çине тăман. Çавна май ăна условнăй майпа кăна ирĕклĕхсĕр хăварнă. «Зебра» çинче çынна вилмеллех çапса хăварнă тĕслĕхсенче кунашкал çемçе явапăх сайра пулать...

■ **Ольга ПАВЛОВА**

# 8 каччăн пĕр шухăш

***Следстви комитечĕн Етĕрнери пайĕ харăсах 8 çамрăк /вĕсенчен иккĕшĕ – çул çитменскерсем/ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Вĕсене пурне те çул çитмен хĕре мăшкăлланăшăн айăплаççĕ.***

Преступлени çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче çĕрле Хĕрлĕ Чутайра пулнă. Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн каччăсенчен пĕри райцентрта пурăнакан, хăй паллакан 17 çулти хĕр патне телефонпа шăнкăравланă та урама тухмашкăн чĕннĕ – калаçма. Анчах хăй унта машинăпа икĕ юлташĕпе пĕрле пынă. Хĕре улталаса хăйĕн килне илсе кайнă. Унта вара хайхискерсен тата 5 пĕлĕшĕ, ӳсĕрскерсем, дискотека хыççăн канаканскерсем, пулнă. Хĕре вĕлерессипе хăратса саккăрăн черетпе мăшкăлланă, ытти намăс ĕç тунă.

Путсĕрсене тытса чарнă ĕнтĕ, следстви пырать. Палăртса хăварни вырăнлă: çамрăксенчен çиччĕшĕ – Хĕрлĕ Чутай районĕнчен, пĕри – Шупашкар каччи. Çав шутра виççĕшĕ тĕп хулари вузсенче вĕренеççĕ, тата виççĕшĕ – ятарлă вăтам вĕренӳ заведенийĕсенче. Иккĕшĕ ĕçлемеççĕ те, вĕренмеççĕ те.

**К.НИКОЛАЕВ.**

# Штраф – 1 млн тенкĕ

***Хула прокуратурин коррупципе кĕрешессипе çыхăннă тĕрĕслев материалĕсене тишкерсе Çĕнĕ Шупашкарти 4-мĕш суд участокĕн миравай судйи "ОЛТЕКС" ОООна РФ КоАПĕн 19.28 статйин 1-мĕш пайĕпе явап тыттарма йышăннă.***

Сăмах юридици вăйĕнчи тытăм саккуна пăсса укçан хавхалантарни пирки пырать. Маларах хула сучĕ асăннă фирма сотрудникне Андрей Уругина должноçри çынна взятка пама тăнăшăн айăпласа 177 пине яхăн тенкĕлĕх штрафланă. Уругин ШĔМĕн Çĕнĕ Шупашкарти экономика хăрушсăрлăхĕн тата коррупципе кĕрешекен пайĕн сотрудникне сутăн илме тăнă. Фирмăн лотерея терминалĕсене туртса илнĕ – вĕсене тавăрма тата кайран хута кĕме ыйтса полици ĕçченне 10 пин тенкĕ, 2 пин тенкĕлĕх апат-çимĕç сĕннĕ. Пакунлă çын взяткăна илмен – уголовлă ĕç çуралнă.

Çакна тĕпе хурса химиксен хулин прокурорĕ "ОЛТЕКС" ООО тĕлĕшпе те адмĕç пуçарнă. Суд коммерци тытăмне 1 млн тенкĕлĕх штрафланă, взятка валли хатĕрленĕ ĕçме-çимене конфискациленĕ.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш сурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07




СТРОИТЕЛЬНАЯ КОМПАНИЯ ЦЕНТР
БЕТОН
РАСТВОР
ДОСТАВКА
г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7
(8352) 76-56-00, 63-80-08

БЕТОН всех марок
(М-200 - 2900 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ
(КБ-20 - 33 руб./шт)
ДОСТАВКА
тел.: 29-25-34, 29-24-88

ООО"Мобильный бетон"
БЕТОН
РАСТВОР

ДОСТАВКА
г. Чебоксары, Эгерский б-р, 49
(8352) 51-22-27, 67-73-57

www.profilch.ru
ПРОФИЛЬ ПРОФНАСТИЛ
СОБСТВЕННОЕ ПРОИЗВОДСТВО
ангары,
КОМПЛЕКТУЮЩИЕ ДЛЯ КРОВЛИ, ВОДОСТОКИ, ДЫМНИКИ
МОНТАЖ ЗАБОРОВ
тел. (8352) 22-95-45, 63-82-85


## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Тел. 8-917-066-41-46.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровым номером 21:17:030301:86, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Вурманкасы (Ильинское с/п), участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:030301, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 50000 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ "МФЦ", с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

## УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 89603021293.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**250.Кровельные, фасадные работы**. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 8-903-322-04-79.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

**330.Бурение скважин** на воду. Т. 89063871363, Владимир.

**339.Бурение скважин** на воду. Т. 89196637746.

**346.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 364060.

**359.Бурение колодцев. Продажа** колодезных колец. Доставка и установка. Т. 89033790901.

**360.Компьютерная помощь.** Недорого. Т. 8-917-660-53-05.

**416.Экстрасенс.** Т. 89876603929.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**420.Доставка щебня,** песка, **гравмассы,** керамзита, чернозёма. **Услуги** самосвала. Т. 8-987-669-29-41.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**368.Требуются:** сварщики, монолитчики, арматурщики, монтажники, плотники, разнорабочие, каменщики. Проживание, питание предоставляются. Оформление по ТК, соцпакет. Тел. 8/8352/ 37-85-75 /«АльянсГрупп»/.

**385.Требуются плотники.** Т. 483900.

**421.**Для работы на монолите **требуются бригады плотников и арматурщиков.** Оплата сдельная, по собеседованию. Т. 89053437905.

Коллектив Управления Федеральной службы по ветеринарному и фитосанитарному надзору по Чувашской Республике выражает глубокое соболезнование старшему специалисту 2 разряда отдела закупок и финансового обеспечения Андрееву Андрею Федоровичу в связи с тяжелой утратой – смертью отца **Федора Васильевича.**

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-виброрпрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.Песок,** гравмассу, чернозём, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **навоз, чернозём.** Дешево. Д-ка. Т. 8-903-358-30-21, 443021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём, навоз.** Дешево. Доставка. Т. 89276689713.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 8-961-339-33-63.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, щебень.** Д-ка. Т. 8-903-322-57-66.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 8902881447, 38-75-74, ***metalservis21.ru***

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: **89176529694, 89276679588.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**28.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 8-937-010-10-54.**

**30.ОКНА** от 5900 руб. **Москитная сетка** – в подарок. **Акция** действует до конца месяца. Предложение ограничено. Звоните по тел. 8-937-954-92-45.

**31.Газобетонные БЛОКИ любых размеров,** керамические поризованные блоки, утеплитель, облицовочный кирпич, силикатный кирпич. Доставка. Выгрузка. Т.: /8352/ 238115, 8-917-078-81-15.

**33.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 89373866629.**

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 89674702736.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент М-500.** Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 89033891400.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 89033220479.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**103.Кирпич, керамблоки, кольца,** цемент. Доставка. Тел. 213680.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**124.Песок,** щебень, **гравмассу,** керамзит, **торф,** кирп. бой, **цемент.** Т. 89033220479, 48-04-79.

**128. Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 5 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**224.Пчелосемьи, улья,** мёд, готовые **рамки.** Тел. 89003303090.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 8-937-391-86-48, 8-927-853-57-32.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит,** песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**253.КВАДРОЦИКЛ** новый, бензиновый – 35000 руб. Т. 8-927-668-98-39.

**294.Песок, гравмассу,** щебень, бой кирпича. **Услуги КамАЗа.** Тел. 89053419146.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, бой кирпича, **к/б блоки.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 89613409305.

**326.Гравмассу,** керамблоки, **песок,** керамзит, **щебень** – недорого. Доставка. Т. 89603128952.

**340.Песок,** ОПГС, **щебень,** асфальтную крошку, **торф, навоз;** вывоз мусора. Почасовая работа. Тел.: 89061326378, 484161.

**351.Пчелосемьи, улья, мёд.** Тел. 8-905-343-62-02.

**353.Песок, ОПГС, щебень.** Услуги КамАЗа. Т. 8-903-379-04-06.

**355.Песок, гравмассу, щебень.** Доставка. Т. 89053479783.

**361.Песок, щебень, гравмассу** - от 5 до 30 тн. в короткие сроки. Недорого. Т.: 89876701442, 89176787166.

**369.Гравмассу, песок** речной, карьерн., **щебень.** Т. 89520269954.

**376.ДИЗЕЛЬНОЕ ТОПЛИВО** по 25 руб. 50 коп. за литр. Т.: 89196529616, 388012.

**390.Блоки, кирпич** красный, силикатный; **гравмассу,** песок, **керамзит, кольца.** Т. 89278629166.

**406.Керамблок** 20х20х40, 12х20х40; **гравмассу,** песок, **керамзит.** Доставка. Т. 8-987-129-70-72.

**408.Керамблоки** 20х20х40 от производителя, **цемент** М-500. Т.: 36-26-23, 89033797768.

**415.Кольца колодезные** от производителя. Д-ка. Т. 89278416247.

*Ас тăвăм*

# Тивĕçе парăннă çын

***Çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче Ю.В.Андропов çуралнăранпа 100 çул çитет***



***"Юрий Андропов" теплоход. Çак сăн ÿкерчĕке чăваш чекисчĕсене 1987 çулта карап экипажĕ парнеленĕ. Паян вăл Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕн музейĕнче упранать.***

Ăна обществăра тĕрлĕрен хакласçĕ. Тĕнчери чи хăватлă ятарлă службăсенчен пĕрин ертÿçи пулнă май Юрий Андропова пакунлă çынсем пĕр сăмахсăр пăхăннă. Çав вăхăтрах вăл хăйĕн тавра иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенчи çамрăк интеллектуалсене – Арбатова, Бовина, Панкова, Шахназарова, ыттисене – пĕтĕçтерме пултарнă. Демократ, калаçура тимлĕ те сăпайлă пулнă, анчах çирĕп йышăнусем тăвас, вĕсене пурнăçлассишĕн çирĕп ыйтас енĕпе те палăрнă. Социализм идейисене чунтан ĕненнĕ, тупа тунă салтак пек хăйĕн тивĕçне пурнăçĕ вĕçлениччене парăннă.

Хăшĕсем ăна совет çĕр-шывĕнчи диссидентсен тăшманĕ тесе хакланă, теприсем вара ун пирки "перестройка" авторĕ теççĕ, йывăр чире пула кăна улшăнусене тÿрре кăларса ĕлкĕреймен-мĕн. Анчах вĕсем те, кусем те вăл хăйне евĕрлĕ çын пулнине йышăнаççĕ, çакăншăн хисеплеççĕ.

Юрий Владимирович Андропов Ставрополь тăрăхĕнче çуралнă. Рыбинскра вĕреннĕ, Карелире ĕçленĕ. Вăрçă нушине тÿснĕ, халăх хуçалăхне çĕклеме хутшăннă. Комсомол тата парти ĕçĕнче вăрах тăрăшнă. СССР Патшалăх хăрушсăрлăх комитетне 15 çул ертсе пынă, пурнăçĕн вĕçĕнче – Совет патшалăхне. Арми генералĕ, Социализм Ĕçĕн Геройĕ, нумай орденпа медаль кавалерĕ, патшалăх хăрушсăрлăхĕн хисеплĕ ĕçченĕ. Унăн шăпи – Тăван çĕр-шыва парăннин, чăн-чăн профессионализмăн çутă тĕслĕхĕ.

Андропов хĕрĕсенчен пĕрин Шупашкарта хĕр тусĕ пулнă, унпа çыру çÿретнĕ, Чăваш Ене килме те хатĕрленнĕ, анчах ашшĕн йывăр чирĕ çула тухма чăрмантарнă, Юрий Владимирович çав чире парăнтарайман. Вилнĕ хыççăн тĕнчери чи пысăк атом крейсерне унăн ятне панă. Кайран, чăн та, ятне улăштарнă. Халĕ те вăл тинĕс-океан тăрăх хăйĕн вăйне туйса мăнаçланнăн ишет. Аслă Атăлпа вара туристсен тăвată палубăллă "Юрий Андропов" теплохочĕ çÿренĕ. Питĕ илемлĕскер Шупашкар пристанĕнче чарăнмассерен карап экипажĕ Чăваш Ен чекисчĕсемпе вĕсен çемйисене хăйĕн борчĕ çине тараватт йышăннă.

Андропова лайăх пĕлнисем унăн анлă тавра курăмне, сăпайлăхне, тĕлĕнмелле пысăк ĕçлес пултарулăхне палăртнă. Анчах Юрий Владимирович патшалăх ĕçĕпе çеç пурăнман, поэзипе те туслă пулнă. Сайра пулакан пушă вăхăтра сăвăсем çырнă. Тусĕсен унăн сăввисен пуххине кăларас шухăш та пулнă, анчах çакăн çинчен пĕлсен Андропов кăмăлсăрланнă. Çапларах çын пулнă вăл...

**И.МИХАЙЛОВ**

# Шупашкар районĕн команди – чемпион

***Чăваш Енре çуллахи ял спорт вăййисем вĕçленнĕ, ку хутĕнче ăмăрту Кÿкеç тăрăхĕнче иртнĕ. Шупашкар районĕн спортсменĕсем кăтартусемпе уйрăмах кăмăллă, вĕсем – чемпионсем.***

Республикăн кăçалхи ăмăртăвĕсене спортăн 600 тусĕ хутшăннă. Икĕ кунра вĕсем армспорт, кĕрешÿ, волейбол, çăмăл атлетика, полиатлон, сĕтелçи теннис, баскетбол турнирĕсенче, кире пуканĕ йăтас, вĕрен туртас енĕпе тупăшнă. Çавăн пекех сĕт сăвакансем, механизаторсем, çавапа çулакансем, çемьесем уйрăм ăмăртусенче хăйсен ăсталăхне тĕрĕсленĕ. Акă çемьесен турнирĕнче пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине Шупашкар районĕнчи Цветковсем хăпарнă. Волейболла выляссипе Кÿкеç тăрăхĕнчи хĕрарăмсемпе арçынсен командисем мала тухнă, армспорт тата кĕрешÿ енĕпе те вĕсене никам та çитеймен. Тимĕр вăййине кăмăллакансен хушшинче Йĕпреçсем пуринчен ытларах очко пухнă, çавапа çулакансен йышĕнче чи пултаруллисем – Вăрнарсем.

Ял спорт вăййисен пĕтĕмлетĕвĕпе Шупашкар районĕ – пĕрремĕш, Патăрьелсем – иккĕмĕш, Вăрнар спортсменĕсем виççĕмĕш вырăнсене йышăннă. Çĕнтерÿçĕ утă уйăхĕнче Воронеж облаçĕнчи Çĕнĕ Воронеж хулинче иртекен Пĕтĕм Раççейри ăмăртусенче Чăваш Ен чысне хÿтĕлĕ.

**А.МИХАЙЛОВ**



# Гороскоп

*Çĕртме, 16-22*

**Сурăх.** Сире лăпкăлăх кирлĕ. Апла пулин те килти тирпейлĕх пирки пăшăрханатăр: лавккана тухса чÿрече карри туянатăр, тутлă кукăль пĕçерсе тăванăрсене чĕнетĕр, кĕнеке вулатăр, телевизор пăхатăр. Тунти кунпа шăмат кун суту-илÿшĕн ăнăçлă пулĕç, эрне кун пĕччеллĕхпе киленес килĕ.

**Вăкăр.** Ку эрне ăс пухма ăнтăлакансемшĕн уйрăмах ăнăçлă, çавăнпах ăсчахсемпе тĕпчевçĕсем пысăк çитĕнÿпе хавхаланĕç. Ытлари кун пурнăçри пĕлтерĕшлĕ утăмсенчен пĕрне тăватăр, кĕçнерни кун тахçантанпах канăç паман ыйтăва татса паратăр, эрне кун пуçлăхăр хушнă ĕçе кăмăлтан пурнăçлатăр.

**Йĕкĕреш.** Чун ыйтнине пурнăçлама май килмĕ. Лару-тăру улшăннăран пачах урăхла шухăшлакансемпе тавлашма тивĕ /тунти кунпа ытлари кун/, мăшăрăрпа /савнийĕрпе/ пĕр чĕлхе тупаймастăр /кĕçнерни кун/, хăйсен тивĕçĕсене сире шанса пама хăтланакан ĕçтешĕрсемпе харкашмалла пулĕ /эрне кун/.

**Рак.** Укçа-тенкĕ тăкакламалли тапхăр хыçа юлнă, нухрат пухма вăхăт. Тунти кунпа юн кун сĕннĕ ĕçсене çийĕнчех пурнăçлама тăрăшăр, харпăр ĕçе йĕркелеме те пултаратăр /кĕçнерни кун/. Пуçăннă мĕн пур ĕçе чунран тăвăр /эрне кун/.

**Арăслан.** Çăлтăрсене ĕненес тĕк – ку эрнере сире ăнать. Сăмах май, харăсах темиçе пуçарура та. Турă çырнине хальччен тĕл пулайманнисем, ахăртнех, унпа юн кун паллашĕç те вырсарни куна пĕрле ĕмĕрлĕхе асра юлмалла ирттерĕç. Ĕçпе çыхăннă шухăшăрсене ытлари кунхи пухура палăртăр, эрне кун алла самаях пысăк укçа кĕрĕ.

**Хĕр.** Лару-тăру хăйне май улшăнасса кĕтсе ан ларăр, пĕрремĕш утăма хăвăрах тăвăр. Ĕçтешĕр тахçантанпах килĕшет-и? Ăна кафере пĕрле сăйланма чĕнĕр /тунти кун/. Пысăкрах должноç шанса парасса кĕтетĕр-и? Пуçлăхăрпа кун пирки калаçса пăхăр /эрне кун/. Дача е çурт туянма ĕмĕтленетĕр-и? Сутакансемпе шăмат кун тĕл пулăр.

**Тараса.** Ку эрне кĕтменлĕхсемпе савăнтарĕ. Çĕнĕ ĕç сĕнĕç /тунти кун/, паха япала тупатăр /ытлари кун/, ырă кăмăллă çынпа паллашатăр /юн кун/, мăшăрланман пулсан шăпа пÿрнине тĕл пулатăр /эрне кунхи уявра/. Вырсарни кун тимлĕрех пулăр – пăтăрмаха çакланас хăрушлăх пур.

**Скорпион.** Урăх хулара е ют çĕр-шывра çĕнĕ партнерсем тупатăр /тунти кун/, вĕсемпе малашне тачă çыхăнса вăй хуратăр. Пурнăçăра тĕпрен улăштаракан çынна тĕл пулатăр /юн кун/ – ахăртнех, вăл сире карьера картлашкипе хăпарма та пулăшĕ. Тавра курăма хаçат-журнал вуласа пуянлататăр /вырсарни кун/.

**Ухăçă.** Сĕм çĕрлечченех ĕçре юлма ан тăрăшăр, мăшăрăрпа, ачăрсемпе юнашар пулăр. Юлташăрсемпе калаçăр /тунти кун/: вĕсенчен пĕрне сирĕнтен пулăшу кирлĕ, анчах вăл çакăн пирки калама шикленет. Килтĕрĕшре тирпейлĕр /ытлари кун/ – сирĕн пата тăванăрсем хăнана пырасшăн. Эрне вĕçĕнче çывăх çыннăрсене тутлă апат-çимĕç пĕçерсе савăнтарăр.

**Ту качаки.** Сирĕн ума ĕç йăтăнса аннă тейĕн, ларма-тăма та вăхăт çитмест. Апла пулин те Ту качакисем эрне вĕçĕнче ĕçрен маларах ыйтса кайма та, отпуска ямашкăн ыйту çырма та хăюлăх çитерĕç. Эрнере мĕн-мĕн тумаллине малтанах палăртăр, ĕçтешĕрсене пулăшма ÿкĕтлĕр, тĕл пулăва ытлари кунпа юн кун кайăр, эрне кун килти ĕçсемпе аппаланăр, шăмат кунпа вырсарни кун канăр.

**Шыв тăкан.** Çуллахи шăрăх кунсемпе киленĕр. Анчах хĕле хатĕрленме те ан манăр: тунти кун укроп-петрушка тураса типĕтĕр е шăнтмăша хурăр, салат тăвăр. Шыв тăкансем юн кунпа кĕçнерни кун юлташĕсемпе пĕрле çул çÿреве тухĕç те киле вырсарни кун çеç таврăнĕç.

**Пулăсем.** Эрнен пĕрремĕш çуррине килтен аякра ирттерме тивĕ – ахăртнех, отпускра мар, командировкăра пулатăр. Ĕç нумай пулсан та çĕнĕ туссем тупатăр /ытлари кун/. Кĕçнерни кун çула тухатăр, анчах темшĕн пăшăрханатăр – лăпланăр, йăлтах йĕркеллĕ пулĕ. Эрне кун канăççăрлантаракан ыйтăва татса паратăр, вырсарни кун канатăр.




| кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|
| 11.06 | + 19 | + 11 |
| 12.06 | + 12 | + 11 |
| 13.06 | + 14 | + 13 |
| 14.06 | + 12 | + 12 |
| 15.06 | + 16 | + 12 |
| 16.06 | + 18 | + 7 |
| 17.06 | + 19 | + 8 |

**"Хыпар" хаçатăн çитес номерĕ çĕртме уйăхĕн 17-мĕшĕнче тухать.**


чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор Н.Д.КОНОВАЛОВ



Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64

коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru

корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru



Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.



РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРЎСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.



Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 8448. Заказ 2106.

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.